Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ЙАНВАР 18 ЫТЛАРИКУН
15 (4828)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

20-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67, Ред. заместителӗн 0—88, Редакци секретарӗн 4—40, Дежурнӑйӑн 0—23

ССР Сойузӗн 1-мӗш созыври Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш Ҫеҫҫийӗ

ХАЛӐХ ЫВӐЛӖСЕМ

Епер Аслӑ Советӑн икӗ палати те депутатсен полномочийӗсене тӗрӗс тесе йышӑнни ҫинчен Мандат Комиҫҫисен доклачӗсене итлесе ҫирӗплетрӗҫ. Депутатсене пурне те, кун ҫинчен Мандат Комиҫҫисем тӗплӗн тӗрӗслесе палӑртнӑ пек, Сталинла Конституципе тата ССР Сойуз Аслӑ Советне суйламалли Положенипе пӗтӗмпех килӗшӳллӗн суйланӑ.

Хӑватлӑ совет ҫӗршывӗнчи государствӑ влаҫӗн чи аслӑ органӗ чӑн-чӑн халӑх суйласа лартнӑ ҫынсенчен, тӑван ҫӗршывӑн хӑйулӑ патриочӗсенчен, Ленин—Сталин парти ӗҫне чунтан-чӗререн йуратса туса пыракан ҫынсенчен тӑрать. Депутатсен хисепӗнче — пысӑкран та пысӑк политикӑлӑ деятелсем, вӗсен йачӗ пӗтӗм тӗнчене паллӑ, авторитетлӑ тата халӑх массисем йуратса хисеплекен партипе совет работникӗсем, пирӗн ҫӗршыври чи хӑватлӑ предприйатисене йертсе пыракан паллӑ талантлӑ хуҫайственниксем, фабрикӑсенчи, заводсенчи тата колхозсенчи чаплӑ стахановецсем, вӗсем тӑван ҫӗршыва тата халӑха ырӑ тӑвасшӑн паттӑррӑн ӗҫлесе хӑйсен йачӗсене чапа кӑларчӗҫ, паллӑ учонӑйсем, писателсемпе артиссем, паллӑ педагогсем, врачсемпе агрономсем, тӑван ҫӗршыва хӑйулӑн хӳтӗлекен Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе командирӗсем.

Аслӑ Совета пирӗн ҫӗршывра йурӑпакан тӗрлӗрен националҗӑсен представителӗсене суйланӑ. Совет халӑхӗсен представителӗсем йумай чӗлхесемпе калаҫаҫҫӗ, апла пулсан та пӗр-пӗрне отличнӑ ӑнланаҫҫӗ, мӗншӗн тесен, вӗсен шухӑшӗсем, туйӑмӗсем, ӗмӗчӗсем пӗр пек, мӗншӗн тесен вӗсем ҫирӗпрен те ҫирӗп туслӑхпа пӗтӗҫнӗ. Аслӑ Совет составӗ пирӗн ҫӗршывра иртнӗ ҫирӗм ҫул хушшинче пулса иртнӗ калама ҫук пысӑк улшӑнусене ӳҫҫӑн кӑтартса парать. Аслӑ социалисӑмлӑ революцин хӗвелӗ айӗнче халӑх хушшинчен пултарулӑ, талантлӑ ҫынсем пит нумай ӳссе ҫӗкленчӗҫ. Социалисӑмшӑн кӗрешсе, вӗсем хӑйсен вӑйне, хӑйсен политикӑлӑ тата общественӑлӑ ӑнланӑвне туптаса ҫирӗплетрӗҫ.

Депутатсем хушшинче епӗр Сметанин пек ҫынсене куратпӑр, вӑл нумайах та пулмасть рйадовой рабочи пулнӑ, халҗхи вӑхӑтра, стахановла ӗҫӗн шкулӗ витӗр тухса, Совет Сойузӗнчи атӑ-пушмак ӗҫлекен пысӑкран та пысӑк фабрикӑ директорӗн заместителӗ пулса тӑчӗ. Вӗсем хушшинче епӗр вунтӑхӑр ҫулхи ткачихӑна—Клавдийа Сахаровӑна куратпӑр, ӑна пир-авӑр тӗртекен пысӑк фабрикӑ директорӗн заместителне лартнӑ, вӑл хӑйӗн нумай йенлӗ те йӑвӑр ӗҫне ӑнаҫлӑн туса пырать. Вӗсем хушшинче епӗр ҫӗнӗ колхозлӑ социалисӑмлӑ йалӑн паттӑр представителне Константин Борина куратпӑр, вӑл 1937 ҫулта пучахлӑ тырӑсем пухса кӳртнӗ ҫӗрте хӑйӗн комбайнӗпе кунсерен пӗччен 950 ҫын, 150 лаша, 37 вейалкӑ, лашапа ӗҫлекен 20 молотилкӑ вырӑнне ӗҫленӗ.

Борин йулташ йӑвӑр машинӑпа ӗҫлеме чаплӑн вӗренсе ҫитнӗ, социалисӑмла ӗҫлес хӗрӳлӗ кӑмӑлпа хавхаланнӑ совет ҫынни мӗн тума пултарнине кӑтартса пачӗ.

Рабочисемпе колхоз хресченӗсем хушшинчен тухнӑ пирӗн депутатсен хисепӗнче епӗр хӗрӳлӗ, хастарлӑ, талантлӑ ҫынсене куратпӑр, вӗсем халҗхи вӑхӑтра аслӑ вӗренӳ заведенийӗнче ӑнаҫлӑн вӗренеҫҫӗ, тӑван ҫӗршыва ырлӑх кӳрес тӗлӗшпе ыран тата лайӑхрах ӗҫлес тесе ӑслӑлӑхсен тупписене алла ҫавӑрса илеҫҫӗ. Марийа Демченко, Дуҫа Виноградова тата нумай ыттисем те ҫавӑн пек мухтавлӑ ҫул ҫинче тӑраҫҫӗ. Сойуз Совечӗн депутачӗсен ҫуррин йахӑнах аслӑ тата вӑтам пӗлӳ пур. А вӗт, вӑл ҫынсем пурте халӑхран тухнӑскерсем, пурнӑҫа кӗмели мӗн пур алӑксене совет влаҫӗ вӗсен умӗнче сарлакан уҫса йанипе вӗсем революци хыҫҫӑнхи ҫулсенче вӗреннӗ ҫынсем пулса тӑчӗҫ.

Сойуз Совечӗн депутачӗсем хушшинче 40 процент ытла—орденоносецсем, 18 депутат—Совет Сойузӗн Геройӗсем. Халӑх государствӑ влаҫӗн аслӑ органне социалисӑмшӑн кӗрешекен, тӑван ҫӗршывшӑн тата халӑхшӑн пысӑк пултарулӑхлӑ ӗҫсем тума пултаракан, пӗтӗм вӑйхала паракан ҫынсене суйласа йанӑ.

Тӑван ҫӗршывшӑн хӗрсех ӗҫлекен Совет халӑхӗ Совет государствин никам тӗкӗнмелле мар чиксне упракан, социалисӑмӑн ҫӗнтерӗвӗсене сыхлакан хӑйӗн тӑван Хӗрлӗ Ҫарне хӗрӳллӗн йуратать. Пирӗн Хӗрлӗ Ҫар халӑхпа пӗрле. Ҫавӑнпа та епӗр Аслӑ Советӑн депутачӗсем хушшинче ҫар работникӗсен ушкӑнне куратпӑр. Унта маршалсем те, командирсем те, кӗҫӗн командирсем те, рйадовой красноармейецсем те пур.

Ҫавӑн пекех, халӑх Хӗрлӗ Ҫарӑн боецӗсене йуратнӑ пекех, паттӑр совет разведчикӗсене, халӑх тӑшманӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пӗтерсе пыракан числӑ наркомвнуделецсене те хытӑ йуратать, хаклать. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ епӗр депутатсем хушшинче числӑ кӗрешӳ ӗҫӗнче хисепе тухнӑ совет разведкин паттӑр ҫемйин представителӗсене куратпӑр.

Коммунистсемпе партире тӑманнисен блок ҫӗнтерӗвӗпе вӗҫленнӗ ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн суйлавӗ пирӗн ҫӗршыв политикӑпа морал тӗлӗшӗнчен отемлӗх историйӗ курман пек пӗрлӗхлӗ пулнине кӑтартрӗ, пӗр ҫӗнтерӳ патӗнчен тепӗр ҫӗнтерӳ патне илсе пыракан Ленин—Сталин партине халӑх хытӑ йуратнине, пирӗн парти авторитетлине кӑтартрӗ. Пирӗн парти халӑх интересӗсемшӗн пӗтӗм вӑй-халтан кӗрешнипе халӑх шанӑҫне илме пултарчӗ.

Тӗнчери чи демократилӗ Конституци тӑрӑх суйланӑ Аслӑ Совет, пирӗн халӑхӑн ирӗкне, ӗмӗтне, шухӑшӗсемпе шанӑҫне палӑртакан орган пулса тӑрать. Аслӑ Советӑн составӗ совет стройӗн ӑшчиккине аван кӑтартса парать.

Аслӑ Совет Ҫеҫҫийӗ уҫӑлас умӗн депутатсен пӗр ушкӑнӗ Мускава тата Мускавра пурӑнакан ҫынсем патне ҫыру йарса, хаҫатра пичетлесе кӑларчӗ. Вӑл ҫырура депутатсем ҫапла ҫыраҫҫӗ:

„ССРС Аслӑ Совет Ҫеҫҫи уҫӑлас сехет ҫывхарса килет. Ҫак Ҫеҫҫире епӗр — коммунистсемпе партире тӑманнисен ҫӗнтерӳлӗ блокӗн партире тӑракан тата партире тӑман депутачӗсем—пирӗн тӑван ҫӗршывӑн ӗҫхалӑхӗ умӗнче тата пӗтӗм тӗнче умӗнче Ленин—Сталин аслӑ партийӗ тавра, Сталинла Тӗп Комитет тата Совет правителстви тавра епӗр хурҫӑ пек ҫирӗппӗн пӗтӗҫсе тӑнине татах та тепӗр хут кӑтартса парӑпӑр. Мускава Ҫеҫҫине епӗр пирӗн халӑх пӗрлӗхне, тачӑн ҫыхӑнса тӑнине, тата ӑна нийепле те аркатма ҫук кине пӗлсе тӑнипе килтӗмӗр. Тӑван ҫӗршыв хӑватне татах та тӗреклетес кӑмӑл пирӗн хушӑри кашни ҫын ӑшӗнчех ҫунса тӑрать".

Пирӗн тӑван ҫӗршывӑн ырлӑхлӑ пурнӑҫӗ коммунисӑмшӑн кӗрешессипе тачӑн ҫыхӑнса тӑрать. Коммунисӑм идейӗпе хавхаланнӑ совет халӑхӗ тата унӑн мухтавлӑ депутачӗсем тӑван ҫӗршывшӑн пӗтӗм вӑйпа тӑрӑшаҫҫӗ. Тӑван ҫӗршыв йачӗпе пирӗн стахановецсем шахтӑсенче, рудниксенче, заводсенче тата фабриксенче геройла ӗҫлеҫҫӗ. Тӑван ҫӗршыв йачӗпе пирӗн колхозниксем социалисӑмла тырпул тухӑҫне темиҫе хут ӳстереҫҫӗ. Тӑван ҫӗршыв йачӗпе пирӗн пограничниксем пӗр тӗлӗрме пӗлмесӗр совет чиккисенчи вахтӑсенче тӑраҫҫӗ. Тӑван ҫӗршыв йачӗпе пирӗн депутатсем, халӑх избранникӗсем, хӑйсен государствӑлӑ тивӗҫне тытса пыраҫҫӗ.

Сталинла Тӗп Комитетпа Совет правителстви тавра пӗр кӑмӑллӑн пӗтӗҫсе тӑракан хӑватлӑ совет халӑхӗн вӗҫӗ-хӗррисӗр вӑйлӑ патриотисӑмӗ пирӗн ҫӗршыва никам ҫӗнтереймилле туса хурать!

(„Правда" умстатйинчен).

Ҫӗрпӳ, Трак, Ишлей, Шӑхасан тата Шупашкар районӗсенчи колхозниксемпе ӗҫҫыннисене

Чӑваш республикӗшӗн Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул строителстви питӗ те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан ӗҫ пулать, ҫав ҫула туса пӗтерсе, епӗр хамӑр республикӑн хуҫалӑхла тата културӑла ӳсӗмне татах та хӑвӑрттӑн малала йама пултаратпӑр, ҫӗнӗ, шултра заводсемпе фабрикӑсем туса лартатпӑр.

Анчах, чукунҫула хӑвӑртрах туса пӗтерес пулсан, пурин те вӑйлӑн ӗҫлемелле, ӗҫлемелле именнӑ халӗ. Епӗр, есӗр ССРС Аслӑ Советне суйланӑ депутатсем, сире строителствӑна туса пӗтерес ӗҫе хастарлӑн тытӑнма тата Чӑваш халӑхӗн ҫулӗ организацилӗхне ӗҫре кӑтартма, ҫак ҫывӑх кунсенчех ҫӗр ӗҫӗсене туса пӗтерме пиншерӗн строителствӑна тухма чӗнетпӗр. Ҫӗр ӗҫӗ нумай йулман, анчах ӑна тумала тата, релсӑсем хывасси нумайа чӑсӑлса ан кайтӑр тесен, халех тумала.

Ӗҫе практикӑла мӗнле организацилесси ҫинчен сӳтсе йавма тата хӑвӑр хутшӑнса ӗҫлес тӗлӗшпе конкретлӑ мерӑсем палӑртма ыйтатпӑр.

ССР Сойуз Аслӑ Совечӗн депутачӗсем:
Л. СПАСОВ, Г. ИВАНОВ, З. АНДРЕЙЕВА, С. КОРОТКОВ, П. КРАСНОВ, Е. ЦЫГАНОВА, И. НОВИКОВ, О. ХАРИТОНОВА, Т. МОИСЕЙЕВА, А. КРАСНОВ, А. РОЗАНОВ.

Сойуз Совечӗпе Националҗӑҫсен Совечӗн 1938 ҫулхи йанварӗн 15-мӗшӗнче пулнӑ пӗрлешӳлӗ ларӑвӗ

ССР Сойузӗн Тӗпӗҫтӑвкомӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ решенисем йышӑннӑ май, ССР Сойузӗн Конституцин хӑшпӗр статйисене улшӑнусемпе хушусем кӗртесси ҫинчен

Депутат А. Ф. ГОРКИН йулташ тунӑ докладран

Йулташсем, Пӗтӗм Сойузри Советсен Саккӑрмӗш Чрезвычайлӑ Сйесӗ ССР Сойузӗн Ҫӗнӗ Конституцине ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн, ССР Сойузӗн Тӗпӗҫтӑвкомӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ чылай постановленисем йышӑннӑ. Ҫавна май, тата хӑшпӗр сойузлӑ республикӑсем хӑйсем составӗнче ҫӗнӗрен облӑҫсем тӑвасси пирки ыйтусем лартнӑ майпа, ССР Сойузӗн Конституцин хӑшпӗр статйисене улӑштармала тата ҫӗнӗрен хушмала пулать.

Епӗ хамӑн сӑмаха калама ССР Сойузӗн Конституцин иккӗмӗш сыпӑкӗнчен тытӑнатӑп. Унта ССР Сойузӗн государствӑ тытӑмлӑх ыйтӑвӗсем ҫинчен ҫырнӑ.

ССР Сойузӗн Конституцин 14-мӗш статйинче Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӑсен Сойузӗ хӑйӗн чи аслӑ влаҫ органӗсемпе государствӑ управленин органӗсем урлӑ „сойузлӑ республикӑсен составӗнче ҫӗнӗ крайсемпе облӑҫсем, ҫавнашкалах ҫӗнӗ автономлӑ республикӑсем тунине ҫирӗплетес" („Е" пункт) ӗҫе туса пырать, тенӗ.

Конституцин ҫак статйипе килӗшсе ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет тӗрлӗ вӑхӑтсенче РСФС Республикӗпе УСС Республик талкишсенче ҫӗнӗрен крайсемпе облӑҫсем уйӑрасси ҫинчен постановленисем йышӑннӑ.

ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗн облӑҫсемпе крайсене уйӑрасси ҫинчен йышӑннӑ постановленисене облӑҫсенчи совет органӗсен йертсе пырас ӗҫне районсем, предприйатисем, МТС, колхозсемпе совхозсем патне ҫывхартас тата облӑҫсенчи совет органӗсен руководствӑ ӗҫне татӑклӑрах тӑвас майпа, хуҫалӑхпа културӑ строителствин практикӑла ыйтӑвӗсене лайӑхрах пӗлсе тӑрса, хӑвӑртрах татса пама май пултӑр, тесе кӑларнӑ.

Хуҫалӑх хӑвӑрт ӳссе пыни, хуласем, йалсенче МТСтанцисемпе колхозсем ӳссе пыни, ӗҫҫыннисен културипе пурнӑҫ условийӗсем ӳссе пыни, массӑсен политикӑла активлӑхӗпе ӑнланӑвӗ ӳссе пыни—вӗсем пурте совет органӗсем умне йертсе пырас йенӗпе пысӑкрах ыйтусем лартаҫҫӗ. Йертсе пырас задачӑсем чылайах йӑвӑрланаҫҫӗ.

Ҫакӑнтах тата пирӗн социалисӑм строителствин пур пайӗсенче те кадрсем ӳсни ҫинчен каласа хӑварма кирлӗ.

Облӑҫсемпе крайсене уйӑрни халҗхи вӑхӑтра социалисӑм строителствин тӗрлӗрен участкисенче ҫӗнӗрен уйӑрса лартнӑ кадрсен ӗҫӗсене ҫӑмӑллатать. Облӑҫсемпе крайсене уйӑрсан хуласен, йалсен, предприйатисен, колхозсен политикӑ, хуҫалӑх тата културӑ ыйтӑвӗсене татса пама ҫӑмӑлтарах. Тепӗр йенчен илсен, облӑҫсемпе крайсене ҫавӑн пек ҫӗнӗле улӑштарни совет, хуҫалӑх тата култура строителствинчи йертсе пырас ӗҫе ҫӗнӗрен кадрсем хӑварттрах лартма май парать.

ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗ йышанна тарӑх ҫӗнӗрен уйӑрса тунӑ пур крайсемпе облӑҫсен уйрӑмлӑхӗсем ҫинче те епӗ чарӑнса тӑраймастӑп. Епӗ ҫӗнӗрен тунӑ крайсемпе облӑҫсенчен хӑшпӗрисем ҫинчен ҫеҫ калатӑп.

Хӗвеланӑҫ Ҫӗпӗр крайӗнчен Новосибирск облӑҫӗпе Алтай крайне тӑвиччен, край талкишӗ 900 пин тваткал километр йышӑнса тӑратчӗ. Хӗвеланӑҫ Ҫӗпӗр крайне 122 район, 2.326 йалсовет кӗнӗ. Крайра 6.330 пин ҫын шутланнӑ. Вӑл шутран хулара пурӑнакансем—1.900 пин ҫын. Акакан ҫӗр лаптӑкӗшӗ 6.600 гектар шутланнӑ, вӑл шутран 5.400 гектар колхозсем, пӗр мӗлйун гектар совхозсем акнӑ. Крайа кӗрекен территоринче 1937 ҫулта 229 МТС пулнӑ. Хӗвеланӑҫ Ҫӗпӗр крайне пайличчен унта 7.350 шкул, 65 техникум, 12 аслӑ шкул пулнӑ.

Крайа пайланӑ хыҫҫӑн Новосибирск облӑҫӗнче 57 район, 1.257 йалсовет, 4 мӗлйуна йахӑн халӑх шутланать. Алтай крайӗнче, Ойрот автономлӑ облӑҫӗсӗр пуҫне, 55 район, 957 йалсовет шутланать. Крайра 2,3 мӗлйун ытла халӑх. Хӗвеланӑҫ Ҫӗпӗр крайне мӗншӗн пайлама кирлӗ пулни ҫакӑнтан пит те лайӑх курӑнать.

Азовпа Хуратинӗс крайне Ростов облӑҫӗпе Краснодар крайӗ туса пайличчен, крайӑн талкишӗ 182 пин тваткал гектар йышӑнса тӑнӑ, 133 район, 1.212 йалсовет пӗрлештерсе тӑнӑ. Крайра 6 мӗлйуна йахӑн ҫын шутланнӑ, вӑл шутран хулара пурӑнакансем 2.105 ҫын. Азовпа Хуратинӗс крайӗнче акмали ҫӗр лаптӑкӗшӗ 7.700 пин гектар пулнӑ, вӑл шутран колхозсем 6 мӗлйун гектар, совхозсем 1.400 пин гектар акнӑ. Азовпа Хуратинӗс крайӗнче 1937 ҫулӑн малтанхи кунӗсенче 291 МТС шутланнӑ. Крайра 4.829 шкул, 83 техникум тата 19 аслӑ шкул пулнӑ.

Азовпа Хуратинӗс крайне Ростов облӑҫӗпе Краснодар крайӗ туса пайланӑ хыҫҫӑн, Ростов облӑҫӗ 61 район, 2 821 пин ҫын, Краснодар крайӗ, Адыгей автономлӑ облӑҫӗсӗр пуҫне, 66 район, 2.99 пин ҫын пӗрлештерсе тӑраҫҫӗ.

Ҫак тӗслӗхсене каланипех ҫав ҫӗнӗ крайпа облӑҫсене мӗншӗн тума кирли аван курӑнса тӑрать.

РСФСРеспубликӗнче ҫавӑн пек ҫӗнӗ облӑҫсем тунӑ май, ССР Сойузӗн Конституцин тивӗҫлӗ статйине улшӑнусемпе хушусем кӗртмеле пулать.

Украинӑ Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗнче те ҫӗнӗ облӑҫсем тунӑ.

УСС Республикин Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет облӑҫсене пайласа пӗчӗклетесси ҫинчен йышӑнса, ӑна ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет ҫирӗплетнин тӗллевӗ — хуҫалӑхпа културӑ строителствине йертсе пырас ӗҫе лайӑхлатас задачӑпа пӗрлех, совет чиккисене ҫирӗплетесси пулать.

ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн УСС Республикӗнче ҫӗнӗрен Житомир, Каменец-Подолск, Николайевск тата Полтава облӑҫӗсем тӑвасси ҫинчен пӑхса тухмала. Ҫавна май, ССР Сойузӗн Конституцин 23 статйине улӑштарассине ҫирӗплетме Аслӑ Совета ыйту лартатпӑр.

Йулашки вӑхӑтра Узбек СС Республикин Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗ тата Белорус СС Республикин Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗ хӑйсен республикӗсенче ҫӗнӗрен облӑҫсем тӑвасси ҫинчен постановленисем йышӑннӑ.

Узбек СС Республикинче, Узбек СС Республикин Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗ йышӑннӑ тӑрӑх, — ӑна ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн ҫирӗплетмеле,—Бухара, Самарканд, Ташкент тата Фергана облӑҫӗсем тума палӑртнӑ. Ҫавӑн пекех тата Хорезмский округӗнчен Хорезмский облӑҫӗ тума сӗнеҫҫӗ.

Белорус Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗнче, Белорус СС Республикин Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗ йышӑннӑ тӑрӑх,—ӑна Аслӑ Советӑн ҫирӗплетмеле,—Витебск, Гомел, Минск, Могилев тата Полесский облӑҫӗсем тума палӑртнӑ.

Казах СС Республикин Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет Хӗвеланӑҫ Казахстан облӑҫӗнчен Хӗвеланӑҫ Казахстан тата Гурйевский облӑҫсем, Кӑнтӑрти Казахстан облӑҫӗнчен Кӑнтӑрти Казахстан тата Кӑзал Ординский облӑҫсем, Хӗвелтухӑҫ Казахстан облӑҫӗнчен Хӗвелтухӑҫ Казахстан тата Павлодарск облӑҫӗсем тӑвасси ҫинчен йышӑннине ҫирӗплетмешкӗн Аслӑ Совета тӑратать.

Белоруҫҫипе Узбек СС Республикӗсенче ҫӗнӗ облӑҫсем туни, Казах СС Республикинчи халиччен облӑҫсене пайлани ҫак республикӑсенче тата ССР Сойузӗнче государствӑ тытӑмлӑхне йӗркелессивче пысӑк ӗҫ пулса тӑрать.

Узбек СС Республикин, Белорус СС Республикин, Казах СС Республикин Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗсем йышӑннӑ решенийӗсенчен тухакан улшӑнусем Конституцин 26, 28 тата 29-мӗш статйисене тивеҫҫӗ.

Акӑ ҫаксем ӗнтӗ Аслӑ Советӑн ССР Сойузӗн Конституцин II-мӗш сыпӑкӗнчи статйисене кӗртмелли улшӑнусемпе хушусем.

Унтан Конституцин III мӗш сыпӑкӗнче Советлӑ Социалисӑмла Республикӑсен Сойузӗн государствӑ влаҫӗн чи аслӑ органӗсем ҫинчен каланӑ сыпӑкра, 49-мӗш статйинче хушу тума сӗнеҫҫӗ. Конституцин 49-мӗш статйи ССР Сойузӗн Аслӑ Совет Президиумӗ тумалли ӗҫсем ҫинчен калать.

Епӗ 49 мӗш статйа ҫумне хушса ҫырмалине Аслӑ Совета сӳтсе-йавма тата ҫирӗплетме вуласа паратӑп. Аслӑ Совет Президиумӗ:

„ССР Сойузӗн оборонӑ интересӗсемшӗн, йе общественӑлӑ йӗркелӗхе тата государствӑ хӑрушсӑрлӑхне тытса пырас тӗлӗшпе уйрӑм вырӑнсенче йе пӗтӗм ССР Сойузӗ тӑрӑх вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек йӗрке туса хурать".

ССР Сойузӗн Аслӑ Советне вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек йӗрке тума ирӗк парасси оборонӑ интересӗсенчен, общественӑлӑ йӗркелӗхпе государствӑ хӑрушсӑрлӑхне тытса пырас ӗҫсенчен тухса тӑрать. Вӑл государствӑ влаҫӗн чи аслӑ органӗн обйазаннӑҫӗпе правинчен—капиталисла йӗритавралӑх условисенче социалисӑмла ҫӗршыва хӑрушсӑрлӑх туса парас ӗҫрен тухса тӑрать.

Малалахи улшӑнусемпе хушусем Конституцин V-мӗш сыпӑкне тивеҫҫӗ. Унта Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӑсен Сойузӗн государствӑ управлени органӗсем ҫинчен каланӑ. Ҫак улшӑнусемпе хушусем ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитетпа Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ постановленийӗсенчен тухса тӑраҫҫӗ.

1937 ҫулхи августӑн 22-мӗшӗнче ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Йӑвӑр промышленнӑҫ Халӑх Комиссариатне пайласси ҫинчен постановлени йышӑнчӗҫ. Йӑвӑр промышленнӑҫ Халӑх Комиссариачӗ составӗнчен автомобилсемпе тракторсем, станоксем, паравозсемпе вагонсем, йалхуҫалӑх машинӗсем, котелсемпе турбинӑсем тӑвакан заводсене, електротехникӑ промышленнӑҫне тата ытти машиностройени промышленнӑҫне те уйӑрнӑ. Вӗсене халӗ машиностройенин Пӗтӗмсойузлӑ Халӑх Комиссариачӗ пӗрлештерсе тӑрать.

Машиностройени—халӑх хуҫалӑхне ҫӗнӗле йӗркелессин ҫӑраусси пулса тӑрать. Партипе правителствӑ ҫак промышленнӑҫ ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхаҫҫӗ. Машиностройени промышленнӑҫа, пӗтӗм йалхуҫалӑхне тата транспорта техникӑ тӗлӗшӗнчен хӗҫпӑшаллантармалли никӗс пулса тӑрать. Машиностройени Халӑх Комиссариачӗ тума кирли промышленнӑҫӑн ҫак паллӑран та паллӑ отраҫлийӗ хытӑ ӳснинчен тухса тӑрать.

Машиностройени промышленнӑҫӑн продукцийӗ 1936 ҫулта 20.764 мӗлйун тенкӗлӗх пулнӑ. 1913 ҫулхипе танлаштарсан, 28 хут ӳсни курӑнать.

Йалхуҫалӑх машиностройенийӗн продукцийӗ, тракторсемпе пӗрле, 1936 ҫулта 2.260,8 мӗлйун тенкӗлӗх шутланса тӑнӑ.

Машиностройени промышленнӑҫӗ ӳснине пула ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ машиностройенин Пӗтӗмсойузлӑ Халӑх Комиссариачӗ тӑвасси ҫинчен постановлени йышӑннӑ.

1937 ҫулхи декабӗрӗн 30-мӗшӗнче Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитетпа Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Тинӗс-Ҫар флочӗн Пӗтӗмсойузлӑ Халӑх Комиссариачӗ тӑвасси ҫинчен постановлени кӑларчӗҫ. Совет Сойузӗ, оборонӑ тӗрекӗ тӗлӗшӗнчен илсен, кирек мӗнле сасартӑк, кӗтмен ҫӗртен пулма пултаракан самантсене кӗтсе илме йаланах хатӗр. Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн халӗ оборонӑ ӗҫӗн халҗхи вӑхӑтри пур тӗслӗ хатӗрсем те пур.

Оборонӑ Халӑх Комиссариачӗ ССР Сойузӗн тинӗс-ҫар вӑйне ҫирӗплетес тӗлӗшпе нумай ӗҫлерӗ. Тинӗс-ҫар флочӗн хуҫалӑхӗ лайӑхланса пыни, вӗҫӗ-хӗррисӗр аслӑ тинӗссемпе ҫӗршывӑн оборони ӗҫӗнче тинӗс-ҫар флочӗ пит те пысӑк вырӑнта тӑни — тинӗс ҫар вӑйне Оборонӑ Халӑх Комиссариатӗнчен уйӑрса Тинӗс-Ҫар флочӗн Халӑх Комиссариачӗ тума ыйтаҫҫӗ.

ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫумӗнчи йалхуҫалӑх ҫимӗҫӗсене хатӗрлекен комитета Пӗтӗмсойузла Халӑх Комиссариачӗ тунӑ майпа, ССР Сойузӗн Конституцин 77-мӗш статйин Пӗтӗмсойузлӑ Халӑх Комиссариачӗсене шутласа тухакан статйа ҫумне хушу туса ҫирӗплетессишӗн Аслӑ Совета сӗнӳ тӑратаҫҫӗ.

1935 ҫулхи декабӗрӗн 1-мӗшӗнче малта пыракан комбайнерсемпе комбайнеркӑсен канашлӑвӗнче Сталин йулташ ҫитес кӗске вӑхӑтрах — виҫӗ-тӑватӑ ҫултах, кашни ҫул 7—8 мӗлйард пӑт тӗштырӑ туса илме хатӗрленес задача лартрӗ. Ҫак задача пурнӑҫа кӗртме епӗр 1937 ҫултах тытӑнтӑмӑр.

(Йулашки 2-мӗш страницӑра).

ССР Сойузĕн 1-мĕш созыври Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕ

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ—В. М. МОЛОТОВ депутат сăмахĕ

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне Молотова саламласа депутатсем нумайччен оваци тăваççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. „Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне—Молотов йулташа—урра!"—тесе кăшкăрнисем йанăраççĕ, тăвăллăн алă çупаççĕ, "урра!" кăшкăраççĕ.

Пултансем, епĕр халь пысăк ыйту сӳтсе-йаватпăр, ку ĕç пирĕн Конституцине, пирĕн Тĕп Саккуна пырса тивет. Ĕçтăвакан Тĕп Комитетпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Конституцин хăшпĕр статйисем çумне улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен йышăнса, Есĕр çирĕплетме тăратнă решенисем, пуринчен ытларах, организацилĕ-административлă ыйтусене тивеççĕ, анчах вĕсем темиçе сойузлă республикăсен административлă пайланăвĕсене тивеççĕ, пĕтĕм сойузлă государствă аппаратне тивеççĕ. Сойузри халăхсен пурнăçлă интересĕсене çырĕнеççĕ.

Горкин йулташ докладĕнче тата республикăсен представителĕсем тухса каласнисенче РСФС Республикинче, Украинăра, Узбекистанра, Казахстанра тата Белоруççинче административлă пайланисемпе çĕнĕрен чылай облаçсем тунине тивекен ыйтусене çителĕклĕ çутатса панă ĕнтĕ. Епĕ пĕтĕмсойузлă органсен ĕçĕпе тата пĕтĕмсойузлă çĕнĕ Халăх Комиссариачĕсем тунипе çыхăнса тăракан ыйтусем çинчен чарăнса тăратăп.

Сойузăн 1934 çулта йышăннă пĕрремĕш Конституцийĕ тăрăх, пирĕн вуникĕ Халăх Комиссариачĕ тата Государствă план Комиççийĕ тунă пулна. Унтанпа çĕршыв пурнăçĕнче нумай улшăнусем пулчĕç, государствă ĕçĕн сулăмĕ нумай хут пысăкланчĕ. Решенисем йышăнсан,—вĕсене халь Аслă Советра çирĕплетме тăратнă,—Халăх Комиссарĕсен Совечĕн составĕнче пирĕн çирĕм ултă Халăх Комиссариачĕн, Комитетсен тата Палатăх Комиççисен,—кунтах Государствă план Комиççипе Совет Контролĕ Комиççи те кĕрет,—руководителĕсем пулаççĕ. Кунсăр пуçне, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнче пĕтĕмгосударствăлă тăхăр организаци ĕçлесе тăраççĕ, вĕсем тӳрех ăна пăхăнаççĕ. Çаксенче ĕнтĕ халăх хуçалăхĕпе культурă строителстви калама çук пысăккăн ӳсни палăрса тăрать çеç мар, çавăн пекех тата çĕршывăн вăрçă оборонипи задачăсем ӳсни те, тата, çавсене май, государствăна йертсе пынă çĕрте пысăк дифференциаци кирли те палăрса тăрать. Государствăна йертсе пынă çĕрте пысăк дифференциаци кирли пуринчен ытларах организацилĕ çĕнĕ формăсем ыйтать.

Пирĕн хуçалăх мĕн тери хăвăрт ӳсни тата çак тĕлĕшпе пирĕн задачăсем мĕн тери ӳсни пирки çакăнтан та лайăх курăнать. Советсен Пĕтĕм Сойузри VIII-мĕш Съесĕ пирĕн Конституцие çирĕплетнĕренпе çулталăк ытларах çеç иртрĕ, а епĕр ĕнтĕ сойузлă республикăсенче те, пĕтĕмсойузлă государствă аппаратĕнче те чылай организацилĕ-административлă ĕçсем туса ирттерме кирли умĕнче тăратпăр.

Çак çулсем хушшинче пирĕн индустри мĕнле пысăк сулпа утса тухнине пурте пĕлеççĕ. Ку уйрăмах йăвăр промышленнăçа тивет, вăл халăх хуçалăхĕн ытти мĕн пур отраслĕсенчен малта пычĕ. Çакна пула ĕнтĕ Йăвăр Промышленнăç Халăх Комиссариачĕ, унран машиностройенине уйăрса иличчен, индустрин хăвăрт ӳсе пыракан пит нумай отраслĕсемлĕ ытлашши пысăк организаци пулса тăчĕ. Халь те, Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариатĕнчен машиностройенине уйăрса илсе Машиностройени Халăх Комиссариачĕ тунă хыççăн та,—халь те ĕнтĕ Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕ—промышленнăçлă чи шултра Халăх Комиссариачĕ пулса тăрать. Вăл Халăх Комиссариачĕ питĕ нумай тата çав вăхăтрах тĕрлĕрен продукцисем туса кăларать.

Хăвăрт ӳсе пыракан машиностройенине,—вăл малашне тата хăвăртрах вăйланассипе халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсем те интересленеççĕ,—хальхи условисенче йатарласа тунă Халăх Комиссариачĕ уйрăм çеç тĕрĕс организацилеме пулать, тесе каланине килĕшмесĕр тăма çук. Çакăнта кăтартакан цифрăсем те çавăн майлă калаççĕ: икĕ пйатилетка тапхăрне çеç,—пĕрремĕшпе иккĕмĕш пйатилеткăсен тапхăрне çеç,—илсен те, çак вăхăтра кăна, урăхла каласан, 1928 çултанпа Совет Сойузĕнче машиностройени 13.5 хут ӳсрĕ. А есĕр пĕлетĕр, техникăлă реконструкци пйатилетне пурне те туса çитермен-ха, техникăлă реконструкци вальли кирлисем халь те хăвăрт ӳсе пыраççĕ. Тĕрĕссипе, пирĕн машинăсем тăвакан икĕ шултра комиссариат пур. Чи малтанах, Оборонă промышленнăç Халăх Комиссариачĕ çинчен калас пулать. Ку та, пуринчен ытларах, машинăсем тăвакан комиссариат. Ăна пирĕн Конституцие йышăннă чухнех, пĕр çулталăк ытларах кайала тунă, анчах ĕнтĕ вăл, вĕçне çитиех темелле, ĕçпе тулса ларнă. Вăл Хĕрлĕ Çарпа Флот вальли кирлĕ машинăсемпе оборудованисем парать тата ытти, пуринчен ытларах, машинăсем тăвакан продукци сахал мар туса кăларать. Пирĕн çапах та, йатарласа Машиностройени Халăх Комиссариачĕ тумала пулчĕ, мĕншĕн тесен пире техника, машинăсем, станоксем виçесĕр нумай кирлĕ. Çакна та асăнса хăварам: пĕтĕмсойузлă тата сойузлă-республикăлă ытти Халăх Комиссариачĕсем те, çавăн пекех тата вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕсем те машинăсемпе тĕрлĕрен оборудованисем сахал мар туса кăлараççĕ. Пирĕн çĕршывра техникăлă реконструкцие малашне туса пырас çĕрте халь ĕнтĕ темиçе уйăх кайала кăна тунă Машиностройени Халăх Комиссариачĕ йертсе пыракан вырăн йышăнать. Машиностройени Халăх Комиссариачĕ тăвасси çинчен йышăннă решение Аслă Совет ырлĕ, тесе шутлатпăр епĕр. **(Алă çупаççĕ).**

Аслă Советра çирĕплетме тăратнă сĕнӳсенче сăмах пыракан иккĕмĕш Халăх Комиссариачĕ вăл, Хатĕрлевсен Халăх Комиссариачĕ.

Хальхи вăхăтра мĕнле тăнине пăхсан та ĕнтĕ ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи йалхуçалăх хатĕрлевĕсен Комитечĕ—тĕрĕссипе каласан, Халăх Комиссариачĕ йышши организаци шутланать. Унăн хăйĕн республикăри органĕсем, крайсемпе облаççенчи, çавăн пекех тата районсенчи органĕсем пур. Тĕрĕссипе илсен, вăл пĕтĕмсойузлă пысăк Халăх Комиссариачĕ, ăна валли, есĕр пĕлетĕр ĕнтĕ, ĕç çитет.

Хатĕрлевсем йенĕпе тăракан задачăсем ӳсни пирĕн йалхуçалăхĕ вăйланнипе çыхăннă. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш пйатилеткăсен тапхăрĕнче, тĕрĕсрех каласан, йулашки 9 çул хушшинче йалхуçалăх хатĕрлевĕсем ӳсни çинчен калакан фактсене илĕпĕр. Çак тапхăр хушшинче тĕштырă хатĕрлесси 2,5 хут ӳсрĕ, сахăр кăшманĕ тата çĕрулми хатĕрлесси 2 хут ӳсрĕ, çĕрмамăк хатĕрлесси 3 хут ӳсрĕ.

Хальхи вăхăтра, пысăк тухăçлă тырпул туса илме пуçланă май,—мĕншĕн тесен колхоз строй хăйĕн пирвайхи çимĕçĕсене парать ĕнтĕ,—чылай колхозсемпе совхозсем ура çине тăчĕç, пĕтĕм йалхуçалăх продукцине, вăл шутра выльăх-чĕрлĕх продукцине те, ӳстерес çĕрте хăйсене чăн-чăнах кăтартса парĕç. **(Алă çупаççĕ).**

Колхозсем ĕнтĕ колхозниксен пуйан пурнăçне тăвас аслă задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыма пуçларĕç. Тĕреклĕ колхозсем тата пуйан колхозниксем—çакăн йышши фактсем пирĕн куç умĕнчех хăвăрт ӳсе пыраççĕ. Çавăн пек колхозсем государствă нушисене те тата лайăхрах витме пултараççĕ.

Халăх илсе тăракан, пирĕн промышленнăç илсе тăракан, государствăна нумай çĕрте кирлĕ тĕп продуктăсене хатĕрлесси,—вăл куллен кун ӳсе пыракан, пысăкланса пыракан ĕç. Сойузăн пысăк территорийĕнче хатĕрлев ĕçне организацилесси пысăк, йывăр ĕç. Ку ĕçре пирĕн халĕ те-ха пысăк çитменлĕхсем сахал мар. Хатĕрлев ĕçне организацилессине хăвăртрах лайăхлатса йани—государствăшăн кирлĕ, йалхуçалăхĕшĕн хăйшĕн кирлĕ, колхозсемпе колхозниксемшĕн кирлĕ. Халăх Комиссариачĕ кирлĕ,—вăл çак ĕçе кирлĕ пек йĕркелесе йатăр, вăл хăйĕн вырăнти тата центрти аппаратне лайăхлаттăр. Вăл пĕтĕм хатĕрлев ĕçне тултарса пырассишĕн ответ тыттăр. Çавăнтан килет те ĕнтĕ Хатĕрлевсен Халăх Комиссариатне туса хума сĕнӳ пани.

Халĕ ĕнтĕ Государствă банкĕ çинчен калама пуçлатăп.

Пирĕн Государствă банкĕ—вăл ĕнтĕ пит пысăк организаци. Унпа тан организаци ку ĕç йенĕпе урăх пĕр государствăра та çук. Государствă банкĕн пĕтĕм республикăсенче, крайсемпе облаççенче тата пĕтĕм районсенче те пекех хăйĕн учрежденийĕсем пур. Вăл пирĕн финанс системин пит пысăк та сарлака аппарачĕ. Унăн ĕçĕ халăх хуçалăхĕн аталанăвĕшĕн, уйрăмах суту-илӳ аталанăвĕшĕн, таварçаврăнăш аталанăвĕшĕн, хулана та, йала та промышленнăç тата çимĕç таварĕсем парса тăрассишĕн калама çук паха, Государствă банкĕн задачисем те ӳсех пыраççĕ.

Ку тĕлĕшпе йулашки çулсем хушшинче мĕн-мĕн пулса иртнине епĕр цифрсенченех курма пултаратпăр.

Государствă банкĕн оборочĕсем, Государствă банкĕ халăх хуçалăхĕпе тăвакан расчотсене анчах илсен, банкăн шалти расчочĕсемсĕр пуçне, йулашки 8 çул хушшинче 13 хут ӳснĕ. 1928—29 çулта Государствă банкĕн халăх хуçалăхĕпе тăвакан çав расчотсем 176 мĕлйард та 662 мĕлйун тата 219 пин тенкĕ пулнă. 1936 çулта вĕсем икĕ триллион та 115 мĕлйард та 793 мĕлйун тата 886 пин тенкĕ пулнă.

Государствă банкĕн ĕçĕн виçи çавăн пек ӳснĕ.

Государствă банкне пирĕн, йала тăрăх, кивĕ йĕркене, хăй тĕллĕн пулмала мар пек, вăл хăй тĕллĕн кредитпа финанс организацийĕ мар пек, финанс халăх комиссариачĕ ăшĕнчи организацисенчен пĕрийĕ пек шутлаççĕ. Ĕçре вăл, паллах, пĕре те апла мар.

Тепĕр йенчен, Финанс халăх комиссариачĕн ĕç масштабĕ те пит пысăккăн ӳснĕ, кашни куллен ӳсе пырать. Çавă вăл пирĕн государствă бӳджетĕнчен те пит лайăх курăнать. Пирĕн бӳджета пĕтĕмĕшпе, урăхла каласан, сойузлă бӳджета республикăсенчи тата вырăнти бӳджетсемпе пĕрле илсен, вара çакăн пек картинă пулать. 1928—29 çулта пирĕн бӳджет 7,5 мĕлйард тенкĕ пулнă, иртнĕ 1937 çулта вăл, малтанлăха шутласа тухни тăрăх, 101 мĕлйард тенкĕ çитнĕ, урăхла каласан, çак 9 çул хушшинче 13 хут ӳснĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Пирĕн государствăн республикă бӳджечĕ тата вырăнти бӳджечĕсем çакăн пек хăвăрт ӳсни пулман пулсан, государствă банкĕн кредит оборочĕсем хăвăрт ӳсни пулман пулсан, вара пирĕн хуçалăх, пирĕн культурă строителстви çакăн пек пысăк хăвăртлăхпа ӳсеймен пулнă пулĕччĕ, вара çĕршыв оборони те йулашки пĕтĕм çулсенче пулнă пек хăвăрт çирĕпленсе пырайман пулнă пулĕччĕ.

Государствă бӳджечĕпе Государствă банкĕн финанс оборочĕсем цифрсемпе, чăнта ĕнтĕ, чылай пысăк, чылай ĕнентермелле, чылай авторитетлă цифрсемпе, совет çĕршывĕнче мĕн пулса пынине тĕкĕр çинчи пекех кăтартса тăраççĕ.

Çакăнтан, йулташсем, хăшпĕр организацилĕ выводсене тăвас пулать. Епĕр Государствă банкĕн оборочĕсене чакарма шутламастпăр, вĕсене малала ӳстерсе пырас тетпĕр. Епĕр хамăрăн бӳджета та чакарма шутламастпăр, государствăн ӳсе пыракан ыйтăвĕсене кирлĕ пек çурăстарса пырса, халăхăн ӳсе пыракан ыйтăвĕсене тата лайăхрах çурăстарса пырса, тĕрĕсленнĕ çулпа малала кайас тетпĕр. Çавăнпа çав тери пахалăхлă финанс организацине, Государствă банкне, ытларах хăй тĕллĕн ĕçлекен тăвасси пирки ыйту туса тăрать. Çавăнтан килет ĕнтĕ Государствă банкне Финанс халăх комиссариатĕнчен уйăрса, ăна хăй тĕллĕн кирлĕ пек ĕçлемеле тума кирли. Çапла вара ун çине Сойузри кредит ĕçне йертсе пырас йенĕпе пысăкрах ответлăх хумала, ăна тӳрех Халăх Комиссарĕсен Советне пăхăнса тăмала туса, унăн руководительне Халăх Комиссарĕсен правине парса. Халăх Комиссарĕсен Советĕнче ĕç тăвакан сасăлă пулмала тăвас пулать. Çаксем пурте Аслă Совет пирĕн сĕнӳсене тĕрĕс, вăхăтлă тесе ырласа йышăнасси çинчен шантараççĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Тата тепĕр халăх комиссариачĕ, Тинĕс-çар флочĕн Халăх Комиссариатне тăвасси çинчен. Çак ыйту пит кирлĕскер те, пы- çак ыйту пулса тăнине килĕшмесĕр тăма çук. Пирĕн халь тăватă тинĕс-çар флочĕ: Балти тинĕсĕнче, Хура тинĕсре, Çурçĕр тинĕсре, тата Лăпкă тинĕсре. Пĕр çĕршывăн ку сахал мар пек, тата çакна та шута илмеле—пирĕн тинĕс флочĕсем хăшпĕр океансемпе те çыхăнса тăраççĕ. Анчах тинĕс флочĕн строителствине йулашки çулсенче кăна чăннипе тытăнма пултарнă. Балти флочĕ те, Хура тинĕс флочĕ те, Çурçĕр тинĕс флочĕ те, Лăпкă-океан флочĕ те халь ĕнтĕ Совет çĕршывне—аслă çĕршыва ӳсме тивĕçлĕ пек ӳсме пуçларĕç. Вĕсем çĕнĕ йеденицăсемпе вăйлăн хушăнса пыраççĕ, халлĕхе пĕчĕкреххисем хушăнаççĕ пулсан, кайран ака, хăшпĕр заводсене туса çитерсен,—вĕсене часрах туса çитерме тăрăшăпăр,—вара хамăрăн флотсене хăвăртрах та шултрарах тинĕс йеденицисем парса пысăклатма тытăнăпăр. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

—Пирĕн çакна шута илмеле—çĕршыв пирĕн пысăк, вăл тинĕссемпе пит вăрăммăн чикĕленсе тăрать, çакă пире çирĕп тĕреклĕ флот кирлине йалана асăрхаттарса тăрать. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Çавăн çинченех капиталисăмла державăсем йулашки çулсенче тинĕс-çар флочĕн строителствине пит анлăн сарса йани те асăрхаттарать. Çав факт çине епĕр ахаль тен кăна пăхса тăма шутламастпăр, мĕншĕн тесен, империалисăмла державăсем тинĕс-çар строителствинче пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлес хăвăртлăхсене партак та пулин чакарас тĕлĕшпе нийепле те калаçса таталаймаççĕ. Тĕслĕхрен, агрессилĕ державăна, Йапонийе илсен, вăл халиччентех тинĕс-çар хĕçпăшал вăйне чакармала тăвас ĕçе хутшăнасшăн мар тăрать. Халиччен, тĕнчери тĕрлĕрен конференцисем пулса иртнĕ пулсан та,—тинĕс çар хĕçпăшал вăйĕсене чакармала тăвас ыйтупа 1936 çулта Лондонра пухăннă конференцийех аса илтерер,—пирĕн Инçет-Хĕвелтухăçри кӳршĕшĕн—Йапоницĕн—нимĕнле чару та çук. Пирĕн çак факта шута илмеле мар-и вара? Паллах, есĕр ĕççем çакăн пек килсе тухнине хамăрăн ĕçре тивĕçлипех шута илмеле тесе калăр. **(Алă çупаççĕ).**

Ака тепĕр факт. Çавăн пекех тата фашисла Итали те, 1936 çулта Лондонра пулса иртнĕ конференцине йачĕшĕн хутшăнса ĕçленĕ пулсан та, тĕрлĕрен вырăнсăр сăлтавсем туртса кăларса тинĕс хĕçпăшал вăйĕсене чакарас тĕлĕшпе ытти çĕршывсемпе кирек-мĕнле килĕшӳ тума та килĕшмест. А Итали халĕ пĕтĕм Вăтаçĕр тинĕсĕнче нимĕн контрольсăр хуçа пуласшăн, ку вăл Совет Сойузĕн пысăкран та пысăк интересĕсене тĕкĕнмесĕр тăма пултараймасть. Пирĕн хамăрăн решенисенче çак факта шута илмеле мар-и? **(Алă çупаççĕ).**

Фашисла Германи тинĕс çинчи хĕçпăшаллă вăйсем пирки тунă килĕшӳ çине алă пуснă тесе калаççĕ, анчах пирĕн çак ал пусни мĕне тăнине пăхмала. **(Алă çупаççĕ).**

Мĕнле пулсан та, пурте пирĕн вăйлă тинĕс çар флочĕ пулмалли çинчен калаççĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Епĕр çапла шутлатпăр: чи кирли вăл, пирĕн государствă карапĕ тĕреклĕ те хăватлă пултăрччĕ, а вăл, епĕр пĕлетпĕр, тĕреклĕ, малашне тата ытларах тĕреклĕнет. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).** Пирĕн совет строй хăватлă, вăл татах та хăватлăрах пуласшăн, тăшмансемшĕн никçан пырса тĕкĕнмеле мар пуласшăн. **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).** Çапла пултăр тесен пире вăйлă Хĕрлĕ Çар кирлĕ тата пире вăйлă Тинĕс-Çар флочĕ кирлĕ. **(Нумайччен алă çупаççĕ).** Хăватлă совет державĕн хăйĕн интересĕсене вырăнлă, пирĕн аслă ĕçе тивĕçлĕ, тинĕс тата океан флочĕ пулмала. **(Нумайччен алă çупаççĕ).**

Çавăн пек флот, вăйлă техникăпа хĕçпăшаллантарнă, хăватлă тинĕс артиллерийĕпе хĕçпăшаллантарнă, совет флотне тивĕçлĕ килĕшӳллĕ тинĕс авиацийĕ туса панă флот организацилес тесен **(тăвăллăн алă çупаççĕ)** тата квалификацилĕ морйаксемпе тинĕс техникĕсен йышлă кадрĕсене советла вĕрентсе ӳстерес тесен—çĕнĕ Халăх Комиссариачĕ кирлĕ, Тинĕс-Çар флочĕн Халăх Комиссариачĕ кирлĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Шăпах çавăнпа ĕнтĕ, пирĕн Хĕрлĕ Çар ӳснĕ пирки, ăна малашне те тĕреклетсе пырас тĕлĕшпе, ăна малашне те пуйан техникăпа хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе кунсерен калама çук пысăккăн ĕçлес пулать, тăван çĕршывăн пĕтĕм чĕререн тăрăшакан красноармейецсемпе командирсене большевикла воспитани парас тĕлĕшпе чылай лайăхрах ĕçлес пулать, шăпах çавăнпа ĕнтĕ—Хĕрлĕ Çарта çак пĕтĕм ĕçе йертсе пырасси умĕнче калама çук пысăк задачăсем тăнăран, а тинĕс çар флочĕ çине йатарласах, вăйларах çавăрăнса пăхма кирлĕрен, епĕр Оборонă Халăх Комиссариачĕне пĕрлех, Тинĕс-Çар флочĕн Халăх Комиссариачĕ пулма кирлĕ, тесе шутлатпăр. **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Пирĕн задачă—Совет Сойузĕн тинĕсĕр çинчи чиккисемпе тинĕс сыранĕсене сыхлас ĕçе тата çӳлерех çĕклесси пулать. Пирĕн морйаксем хăйсен задачине чылай пурнăçа кĕртĕç,—Тинĕс-Çар флочĕн Халăх Комиссариачĕ советăн вăйлă тинĕс-çар флотне тăвас тĕлĕшпе çине тăрса ырми-канми ĕçлĕ, тесе шанса тăратпăр. **(Нумайччен алă çупаççĕ).**

Пулашкинчен, депутат йулташсем, сирĕнпе пĕрле çирĕплетме тăратнă сĕнӳсенчен пĕрин пирки темиçе сăмах калас пулать. Вăл—Конституцин 49-мĕш статйин çумне хушни çинчен. Ĕç кунта çав статйăна Аслă Совет Президиумĕн, кирлĕ пулсан, çав вырăнта вăрçă вăхăтĕнчи пек йĕрке туса хурас ыйтува татса парас права пурри çинчен кăтартса панипе хушасси пирки тăрать.

Есĕр пĕлетĕр, йулашки çулсенче Совет Сойузĕ çине йутран килсе никам та тапăнман, çапах та империалисăмла агрессорсем йенчен тĕрлĕ йышши провокацисем çителĕклех пулнă. Çавăнпа та кунта кăтартса панă ĕççепе тума тата кун пирки уйрăм решенисем йышăнма кирлĕх пулман. Çапах та пирĕн малашне пулма пултаракан йăвăрлăхсем пирки мĕн те пулсан малтанах курса тăмала. Çавăнпа та, мана çавăн пек туйăнать, çак ыйту тăрăх тăратнă сĕнӳ сире ăнланмала тата пĕтĕмпех килĕшмеле пек. **(Тимлĕн алă çупаççĕ).**

Конституцире улшăнусем тунă май епĕ чарăнса тăрас тенĕ ыйтусем çакăн пек ĕнтĕ, йулташсем.

Пирĕн совет Конституцийĕ—лайăх Конституци, çавăнпа та ăна халăх Сталинла Конституци тесе калать. **(Нумайччен чарăнмасăр тăвăллăн алă çупаççĕ, пурте ура çине тăраççĕ, „Урра!", „Сывă пултăр Сталин йулташ!"—тесе саламласа кăшкăраççĕ).**

Çапах та пурнăç хăйĕн черечĕпе малала кайать. Пирĕн çĕршыв кунран-кун ӳсет тата çĕнĕ организацилĕ формăсем ыйтать. Пирĕн Конституцине кĕрекен улшăнусемпе хушусем çакăнтан килеççĕ те ĕнтĕ. Ку кирлех. Ку вăл пирĕн совет строй ӳсе, тĕреклене, йусанса пынине килĕшӳллĕн пулса пырать.

Çаксенче пуринче те епĕр пирĕн аллăра, ĕççыннисен аллинче тăракан ĕçĕн вăйне тата унăн пахалăхне куратпăр,—çаксенче пуринче те епĕр Ленин—Сталин ĕçĕн аслă палăхне, хăватлă вăйне куратпăр! **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ, пурте ура çине тăраççĕ, „Урра!", „Сывă пултăр Сталин йулташ!", „Сывă пултăр Молотов йулташ!"—тесе кăшкăраççĕ).**

ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсем столицăри предприйатисенче, метрора, музейсенче

ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсем Мускав чапĕпе паллашаççĕ. Йанварĕн 16-мĕшĕнче депутатсен ушкăнĕсем метрон Покровски радиусне пăхса çӳренĕ. Кантăрла „Площадь революции" станцине Украина, Казах ССР тата Молдави АССР депутачĕсен ушкăнĕсем пынă. Вĕсем пуйăспа „Курская" станци таран çитсе кайăла çӳренĕ.

Сталинградри „Красный Октябрь" заводри паллă стахановец пĕрремĕш класри мастăр, ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕ Константин Черкасов „Серп и молот" завода пырса курнă. Черкасов йулташ пынă мартен цехĕнчи хурçă шăраттаракан рабочисем професси тĕлĕшĕнчен хăйсен йулташне—халăх суйланă çынна ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Черкасов йулташа „Серп и молот" заводри мартен цехĕнчи рабочисем хăшпĕр çĕнĕ ĕçсем, сăмахран, тăваттăмĕш номерлĕ кăмака çинче çĕнĕрен хушса лартмалли форсункăсене уçăх тĕрлĕ туни интереслентернĕ, кун пек тупипе металл шăранасси хăвăртланать. Ку çĕнĕ ĕçпе Черкасов йулташ „Красный Октябрь" заводри хăйĕн цехĕнче усă курма шутланă.

Ленин музейне ССР Сойузĕн Аслă Советне Грузирен, Абхазирен, Удмуртирен, Крымран, Белоруççирен т. ыт. суйланă депутатсем пынă. Пур депутатсем те музейра Ленин çинчен ӳкернĕ саслă кинофильм курса итленĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсем Третйаковски галлерейине тата унта уçăлнă Грузи СС Республикин искусстви выставкине пысăк тимлĕхпе пăхнă. Йанварĕн 16-мĕшĕнче ку выставкăна Коми АССР, Мари АССР, Киров облăçĕн, Мордва АССР, Туркмен ССР, Иваново облаçĕн депутачĕсем те пулнă. Грузи пуçа кĕрсе йулнă. Депутатсем уйрăмăнах Сталин йулташăн революцийĕ ĕçне, Кавказлешĕнчи тата Грузири большевикла организацисен историпе ĕçне кăтартса панă уйрăмна интересленнĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Казахстанран, Киргизирен, Грузирен, Азербайджанран, Совет Сойузĕн ытти республикисемпе облăçĕсенчен суйланă депутачĕсем Ленин мавзолейĕнче пулнă.

(ТАСС).

Франци хаçачĕ Аслă Совет Çессийĕ çинчен

ПАРИЖ, йанварĕн 15-мĕш. (ТАСС). „Тан" хаçат хăйĕн Мускаври корреспонденчĕ панă пысăк телеграмма пичетлесе кăларнă, вăл телеграммăра корреспондент ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕ мĕнле иртсе пыни çинчен çырать. Телеграммăра Сойуз Совечĕн членĕсем çул тĕлĕшĕнчен çамрăкки çинчен палă туса калать. Çавăн пекех тата корреспондент: „Сойуз Совечĕн Мандат Комиссин председателĕ Щербаков Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекен чылай работникĕсене суйлани çинчен пĕлтерсен тăвăллăн ала çупрĕç. Щербаков Йежов йатне асăнсан, депутатсем пурте ура çине тăрса хавасла оваци турĕç"—те е палĕртать.

Телеграммă авторĕ, малала тата Сталин, Ворошилов, Йежов йулташсем ларува пырса кĕрсен, Националънăçсен Совечĕ вĕсене хĕрӳлĕ йышăнса илнине паллă туса çырать.

А. Ф. ГОРКИН йулташ доклачĕн йулашки

Иртнĕ çул пирĕн йалхуçалăх производствийĕ патша Роççийĕн йалхуçалăхĕ вăрçăччен хинчен икĕ хут ытларах продукци пачĕ.

Государствăн пуйанлăхĕсем ӳссе пыраççĕ. Çав продуктăсене уйăрса тăмали техникăла базă çирĕпленет. Йалхуçалăхĕнчи ĕç тухăçлахĕ ӳссе пынă май, йалхуçалăх продукцисене хатĕрлес ĕçĕн пахалăхĕ те хăпарсах пырать. Çавăнпа та ĕнтĕ Пĕтĕмсойузлă Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕ пуç пулса тăракан хатĕрлев аппаратне тăвасси кирлĕрен те кирлĕ ĕç пулса тăрать.

Çĕнĕрен Халăх Комиссариачĕсем тунă май, 77-мĕш статйа çумне çакăн пек хушу сĕнмеле: Пĕтĕмсойузлă Халăх Комиссариачĕсем çумне тата машиностройени, Тинĕс-çар флот тата Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕсене хушмала.

ССР Сойуз Конституцин 70-мĕш статйи çумне „Государствă банкĕн правлени председателне" текен сăмахсем хушма сĕнмеле.

Государствă банкĕн правлени председателне ССР Сойуз Халăх Комиссарĕсен Совечĕн составне кĕртмеле.

Йулашкинчен тата тепĕр асăрхаттару пур. Шалти суту-илӳ Халăх Комиссариат йатне Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ тесе улăштармала.

Çакна йышăннă май, Конституцин 78-мĕш статйинче—„Шалти суту-илӳ" сăмахсене „Суту-илӳ" сăмахсемпе улăштарма сĕнмеле.

ССР Сойуз Конституцин 83 статйинче „Хатĕрлев Комитечĕн Уполномоченнăйне" текен сăмахсене кăларса пăрахмала тата „Шалти суту-илӳ" текен сăмахсене—„Суту-илӳ"—текен сăмахсемпе улăштармала.

Ака ССРС Конституцин хăшпĕр статйисем çумне Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн Аслă Советĕнче хушса çирĕплетме пăлĕртнĕ улăштарусемпе хушусем. (Алă çупаççĕ).

„Пирĕн шухăшсемпе туйăмсем—Кремльри дворецра..."

Пирĕн аслă çĕршывра çак кунсенче Совет парламенчĕн пĕрремĕш Çессии материалĕсене сӳтсе йавман пĕр кĕтес те çук.

Пур çĕрте те ĕççыннисен митингĕсем пысăк хаваслăхпа иртеççĕ.

—Пирĕн шухăшсемпе туйăмсем,—теççĕ Вышне-Волоцкри Каганович йачĕпе тăракан фабрикăри рабочисем,—Кремльри дворецра, унта пĕтĕм халăх шанса суйланă йуратнă Сталин хутшăнса ĕçленипе пирĕн социалисăмлă тăван çĕршывăн хăватне малала çирĕплетес ыйтусене татса параççĕ.

Вышне-Волоцк районĕнчи Илйинскри вулав çуртĕнчи радиоаудиторине колхозниксемпе колхозницăсем 200 çын ытла пухăнаççĕ, вĕсем радио тăрăх Çессии ĕçĕ çинчен черетлĕ информацилĕ пĕлтерӳсене итлеççĕ.

Днепропетровск облăçĕнче Çессии материалĕсене массăлă вĕрентесине организацилеççĕ. Орджоникидзе йачĕпе тăракан, Запорожстальметаллурги комбинатĕнчи тата ытти заводсенчи парти организацийĕсем ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессии решенийĕсем çинчен каласа ăнлантарма шефа илнĕ колхозсене бригадăсем йанă.

Çурçĕр-хĕвеланăç чиккинчи Н-ски чикĕ отрйадĕнчи подразделенисенче нумай çынлă митингсем пулса иртеççĕ.

—Çак историлĕ кунсенче,—теççĕ пограничниксем,—пирĕн мĕн пур шухăшсем аслă Сталин çинче. Епĕр вăл панă пĕтĕм кăтартусене пирĕн пурнăçăн хастарлă саккунĕ пек йышăнатпăр. Кăçалхи çула çар ĕçне тата политикăна вĕреннĕ çĕрте питĕ лайăх кăтартусемпе паллă тума обйазательствă паратпăр. Социалисăм çĕршывĕн чиккине йаланах тĕркелĕ çăрапа питĕрсе тытса тăратпăр.

ССР Сойузĕн 1-мĕш созыври Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çеççийĕ

Сойуз Совечĕпе Националђнăçсен Совечĕн пĕрле пулнă ларăвĕнче 1938 çулта йанварĕн 15-мĕшĕнче

депутат Н. А. БУЛГАНИН каланă сăмахĕ

Йулташсем, епĕ Российă Советлă Федерагивлă Социалисăмла Республикинчен суйланă депутатсенчен пĕри пулса, докладчик каланă ыйту тăрăх,—ССР Сойузĕн Конституцин 22-мĕш статйине улăштарасси çинчен калатăп.

Ытти улшăнусемпе пĕрле, çак улшăну пирĕн республикăшăн уйрăмах пысăк вырăнта тăрат. Пирĕн республикă, вăл территори тĕлĕшĕнчен пит те пысăк пулнă май, унăн халăхĕ питĕ нумай пулнă май, халăх хуçалăхĕ пит те вайлă ÿсне май тытăм тĕлĕшĕнчен чи йывăртарахи пулат. Çак йенчен пăхсан, ССР Сойузĕн Конституцин 22-меш статйине улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен калание хирĕç пулма мар, йăлах урахла, епĕ шутлатăп, Аслă Совет депутачĕсем, Россиă Советлă Федеративлă Социалисăмла республикăри пĕтĕм халăх çак хушусемпе улшăнусене ырă кăмăлпа йышăнса илĕç.

Пурне те паллă, йулташсем, çак улшăнусемпе хушусене техникăла кулленхи шухăшсем тăрăх çеç туман. Çак улшăнусенчен кашнийех пирĕн республикăри крайсемпе облăçсемшĕн пысăк усăлă, вĕсене малала ÿсме май парат, пирĕн республикăн пĕтĕм пурнăçне лайăхлатат.

Аслă Совет постановленин пройекчĕн пĕрремĕш пунктĕнче çапла каланă:

„Советлă Социалисăмлă республикăсен Сойузĕн Аслă Совечĕ йышăнат:

Россиă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикă составĕнне крайсем: Алтай тата Красноярск, облăçсем: Архангелђски, Вологода, Иркутск, Ново Сибирск, Орловский, Ростов, Рйазаңђ, Смоленск, Тамбов, Тула, Чита тунине çирĕплетес“.

Кăна çак крайсемпе облăçсенчи халăхсем уйрăмах пысăк хавăслăхпа йышăнаççĕ. Çĕнĕ крайсемпе облăçсем тăвас тĕлĕшпе организацилле ĕçсем туни çак крайсемпе облăçсен хуçалăхпа кулђтури ÿснине кăтартат.

ССР Сойузĕн Конституцин 22-ш статйи çумне улшăнусем туни государствă влаçĕн органĕсене халăх çатне, колхоз патне, район патне, йал патне çывхартнине пĕлтерет.

Çак организацилĕ улшăнусем çав облăçсен, районсен ĕçĕсене, колхозсен ĕçĕсене государствă влаçĕн органĕсем йенчен тата ытлараĥ конкретлă йертсе пыма май парат. Урăхла каласан, халăх влаç умне каларса тăратакан ыйтусем çине хăвăртрах тата оперативлăрах çаврăнса пăхмала тăват.

Нимĕн иккеленмели те çук, çĕнĕ крайсемпе облăçсем туни çав облăçсен хуçалăхĕпе кулђтурине, уйрăмах вĕсен крайсемпе облăçсен центрĕсене, нумай пин халахлă хуласене, Орел, Тамбов, Рйазаңђ, Вологда, Чита, Барнаул пек хулă; тата край центрĕсене тата пысăккăн, тата хăвăртăн ÿстерме май парат.

Йулташсем, пирĕн правителствă организацилĕ ыйтусене пысăк вырăна хурат, малашне те питĕ пысăк вырăна хурĕ. Çакна пире хамăрăн болђшевикла парти вĕрентет, çакна пире Сталин йулташ вĕрентет. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Пирĕн республикăран суйланă депутатсен ушкăнĕпе канашласа çак трибуна çинчен сăмах калама килĕшсен, епĕ çак положенине çирĕплетекен хăшпăр фактăсене аса илтĕм. Вĕсенчен пĕрне илсе кăтартатăп.

1930 çулта, пирĕн çĕршыв хамăрăн йалхуçалăхне социалисăмла çĕнетес ĕçе вăйлатса йанă вăхăтра, болђшевиксен партин XVI-мĕш сйесенче Сталин йулташ влаçăн районти органĕсене çирĕплетесси çинчен каланă.

Ун чухне сăмах округсене пĕтерсе районсем тăвасси çинчен пынă. Сталин йулташ болђшевиксен партин XVI-мĕш сйесĕнче çапла каланă: „Епĕр районировани туман пулсан, нимĕн иккеленмели те çук, йалхуçалăхне урăхлатса çĕнетме тата колхоз йухăмне аталантарма, пысăк ĕçе çĕклесе йама пултарайман пулăттăмăр“.

Районированин тĕллевĕ,—каланă Сталин йулташ—партипе совет, хуçалăхпа кооператив аппарагне йалхуçалăхĕн ыратса тăракан ыйтусене вăхăтра татса пама, ăна çĕклеме, ăна реконструкцилеме район патне, йал патне çывхартасси пулат.

Куратăр ĕнтĕ, йулташсем, йалхуçалăхне социалисăмла çул çине тăратса урăхлатса çĕнетессинче, çакăн пек пысăк ĕçре, Сталин йулташ организацилĕ ыйтуна тĕп вырăна лартнă.

Акă халĕ ĕнтĕ, йулташсем, епĕ ыйту паратăп: крайсемпе облăçсене пайан та çаплипех хăварсан, урăхла каласан, вĕсене пĕчĕклетмесен, çĕнĕ облăçсем тумасан, çак крайсемпе облăçсем, вĕсен йертсе пыракан организацисем, Сталин йулташ каланă пек, районăн, йалсовечĕн, колхозăн, йалăн ыратса тăракан ыйтусем патне çитме пултараççĕ и? Çук, пултараймаççĕ.

Кунта докладчик уйрăм облăçсемпе крайсен характеристикине илсе кăтартрĕ. Азовпа Хуратинĕс крайне илĕпĕр. Ăна пайличчен унăн 1.212 йалсовечĕ, 6 мĕлйуна йахăн халăх пулнă. Хĕвеланăç-Çĕпĕр крайне илсен, унăн 2.326 йалсовечĕ, 6 мĕлйун та 330 пин халăх пулнă. Хĕвелтухăç Çĕпĕр облăçĕн 941 йалсовечĕ, 1.562 пин халăх пулнă. Мускав облăçĕн 5 пин йалсовечĕ, 11 мĕлйун çын ытла пулнă. Мускав облăçĕн бÿджечĕ 2.200 мĕлйун тенкĕ пулнă. Пĕр çак облăç бÿджечĕ кăна Хĕвеланăç Йевропăри хăшпĕр государствăсен бÿджетĕнчен пысăкрах.

Ыйтмала: çакнашкал крайсемпе облăçсенчи йертсе пыракан организацисем йалсоветсем патне, кулленхи, кирлĕ ыйтусем патне çитме пултарни? Ĕлек пире облăçсене пайлассине кадрсем пулманни тытса тăнă, халĕ пире пурне те паллă: халĕ пире ку ыйту тытса тăма пултараймаст, çак çулсенче лайăх ĕçлекен çĕршер пин, мĕлйуншар чаплă, пултаракан çынсем, геройсем, стахановецсем, инженерсем, техниксем, пысăк вĕреннĕ çынсем, халăх хушшинчен тухнă çынсем, государствă органĕсене йертсе пыракансем, ĕçе лайăх илсе пыракансем, социалисăмла государствăн чăн-чăн деятелĕсене тивĕçлĕхпе йертсе пыма пултаракан çынсем ÿссе çитĕннине куратпăр.

Йулташсем, ССР Сойузĕн Конституцин 22 мĕш статйине улăштарма палăртнă шухăша çирĕплетекен тата ытти чылай фактăсем те илсе кăтартма пулат. Вăхăта ытлашши йышăнмастăп, ыйту паллă пулĕ тесе шутлатăп.

Епĕр, йулташсем, Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш Сйесĕнче хамăрăн историйĕ, Сталинла Конституцине сÿтсе-йавса çирĕплетнĕ чухне, пурте пĕр сасăпа пирĕн Сталинла Конституцин уйрăмлăхĕ — унта Совет Сойузĕнчи рабочисемпе ĕççынни массисĕм мен кĕрешсе илнĕ, çавсене çырса хунине палăртрăмăр. Акă халĕ ĕнтĕ, йулташсем, ССРС Конституцин уйрăм статйисене кĕртме сĕнекен улăштарусемпе хушусене илсĕн, вĕсем пирĕн çĕршыв тата пысăкрах ÿсĕм тунине, пирĕн аслă тăван çĕршыври ĕççыннисем болђшевиксен паттăр партийĕ, пирĕн аслă Сталин йертсе пынипе тата пысăкрах çĕнтерÿсем тунине палăртаççĕ. (Тăвăллăн нумайччен, алă çупаççĕ, „Урра“ кăшкăраççĕ, „Сыва пултăр Сталин йулташ!“).

Йулташсем, пирĕн Конституцине кĕртме сĕнекен хушусемпе улшăнусем çакăн пек пулаççĕ ĕнтĕ. Халăх Комиссариачĕсене уйăрма тата çĕнĕрен комиссариатсем тума сĕнни те çавнах пĕлтерет. Вĕсем рабочисем, работницăсем, ĕççыннисем; пирĕн стахановецсем, пирĕн Совет правителстви йертсе пынипе, пирĕн болђшевиксен парти йертсе пынипе, Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче пысăк çĕнтерÿсем, пысăк çитĕнÿсем тунине кăтартаççĕ.

Йулашкинчен тата, пирĕн Конституцин 49-статйине хушусемпе улшăнусем кĕртесси çинчен. Сĕнÿсенче Советлă Социалисăмла Республикăсен Сойузĕн Конституцин 49 мĕш статйине: ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Президиумĕ Советлă Социалисăмла Республикăсен Сойузĕн интересĕсемшĕн йе обшчествăлă йĕркелĕхпе государствă хăрушсăрлăхне тума уйрăм вырăнсенче, йе Пĕтĕм Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕнче вăрçă чухнехи пек йĕрке тума права паракан пункт хушасси çинчен каланă.

Обшчествăла йĕрке тата государствă хăрушăсăрлăхне тăвасси çинчен каласа, епер йулташсем, пайан хамăр çĕршывра обшчествăлă йĕркелĕхпе государствă хăрушсăрлăхне туса выракан органсен ĕçĕпе мухтанма пултаратпăр, Епĕр хамăрăн мухтавлă НКВД па тата унăн мухтавлă Сталинла Комиссарĕпе—Йежов йулташпа мухтанатпăр. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).

Епĕр пирĕн сталинла вĕренсе çитĕнтерне Халăх Комиссарĕ Йежов йулташ йертсе пынипе Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешекен организаци пуррипе мухтанатпăр (Нумайччен алă çупаççĕ).

Анчах епĕр Сталин йулташ халĕ тăшмансем пире хирĕç кĕрешме пăрахманни çинчен, пирĕн социалисăмла тăван çĕршыв тавра капиталисăмла йĕритавралăх пурри çинчен, вăл пурăннă чухне вăл пирĕн предприйатисене, фабриксемпе заводсене хăйĕн шпионĕсемпе диверсанчĕсене йарса тăни çинчен кăтартнине пĕлетпĕр, асра тытатпăр.

Клас кĕрешĕвĕ пынă условисенче репреççилĕ мерăсем те, хамăрăн организацилĕхе вăйлатни те кирлĕ.

ССР Сойузĕн Конституцин уйрăм статйисене улăштарма, хушусем тума паракан сĕнÿсем епĕр малала кăйнине пĕлтереççĕ. Паллах, вĕсене Советлă Социалисăмла Республикăсен Сойузĕн Аслă Совечĕ çеç мар хавасла йышăнĕ, вĕсене аслă Совет Сойузĕнчи пĕтĕм халăх та хаваслăн йышăнĕ. (Алă çупаççĕ).

Елĕк районĕнчи колхозсенче

Вутланри „Болђшевик“ колхоз ку таранччен çуракине начар хатĕрленсе пычĕ. Суртлă вăрлăхсене хатерлемен, суртласа тасатман тата йалхуçалăх машинисене те йусаман. Çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çак кунсенче колхозниксен аслă пухуве пулса иртрĕ. Пухура райĕçтăвком председателĕ тухса каласа çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе халђ мĕн-мĕн тумали çинчен тата партипе правителствă йышăннă постановленисем çинчен ăнлантарса пачĕ.

Çавăн хыççăн колхозниксем пур те çуракине хатерленес ĕçре йулса пынине пĕтерме пулчеç. Çав шутпа Татмăшри Молотов йачĕпе тăракан колхоза социалисăмла ăмăртăва чĕнчĕç.

М. К.

Актайри „Комбайн“ колхозра 450 лав тислĕк уйа кăларчĕç тата 120 пăт кайак-кĕшĕк тислĕкĕ, 300 пăт кĕл пухрĕç, 150 гектар çинче йур тытрĕç, 800 лав торф кăларчĕç, Йалхуçалăх машинисене пурне те йусаса çитерне, лаша таврашсене те хатĕрлесе хунă. Акмали сĕлĕ вăрлăхне трийер витер кăларса тасатнă. Агротехникăна вĕренмели кружок организациленĕ.

В. М.

Çуракине хатĕрленессинче партилĕ-массăлă ĕçе вăйсăрлатмала мар

Шăхасан, йанварĕн 17-мĕшĕ (Телефонпа, хамăр корр.). Нумай пулмаст пулса иртнĕ йалхуçалăх стахановецĕсен районри слђочĕ кашни колхозрах кашни гектартан 100 пăтран кайа мар тĕштырă туса илме обйазателство йышăнчĕ. Çакă ĕнтĕ районри парти, комсомол, профсойуз организацийĕсене, çĕрĕç органĕсене тата ытти организацисене те хăйсен ĕçĕсене тĕпрен çĕнетсе болђшевикла ĕçлеме, партилĕ-массăлă ĕçе çÿлĕ вырăна лартма, çав май пĕтĕм колхозниксен массине вăйлă тырпулшăн кĕрешÿве организацилеме хушат.

Анчах, калас пулат, çак кунсем хушшинче районра тем тĕрлĕ ларусем туса иртерсĕ пулин те, çуракине хатĕрленес ĕçре улшăну туни курăнмаст. Тÿрех каламала, районри çĕрĕç пайĕ оперативлă йертсе пымаст. Мĕнле колхозра мĕн-мĕн тунине тата районĕпе ĕç мĕнле пынине çĕрĕç пайĕ каласа пама пултараймаст.—Сводкăсем çук,—тесе çеç лараççĕ кунта.

„Чуваш ЦИК“ колхоза илер. Кунта çуракинче мĕн тумалине кăтартакан план та çук. Çĕрĕç пайĕ ку колхоза план пани те паллă мар. Анаткас Кибеч, Вăтакас Кибеч, Çÿлти тата Анатри Вăрман йалĕсенчи колхозсенче 3—4 кун хушши правлени канцелђарийĕсене никам та пырса курман. Колхозниксем ĕçлесшĕн, анчах йертсе пыракансем çук. Колхозниксем-стахановецсем кашни кун правлени канцелђарине пырса бригадирсенчен ĕç нарйачĕсем ыйтаççĕ. Вĕсене никам та ĕç памаст. Çав колхозсенче 1937 çулти тупăшсемпе тырпулсене те валеçсе пĕтермен.

Районĕпе 5 трийер халђ те йусавсăр лараççĕ. Трийерсем çитмеççĕ. Ĕçлекен трийерсем те кунне 12—15-шер центнер çеç вăрлăх суртласа кăлараççĕ.

Çÿлти Вăрманкасри колхозра колхоз председателĕ А. Николайев айăпне пула чи лайăх лашана—„Орела“ пăснă, „Стрела“ лашана начарлатса йанă. Ку колхозра лашасене çуракине хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Çавăнпа пĕрлех тата лаша таврашĕсем çинчен те шутласа пăхман, кÿлмели хатĕрсем çитмеççĕ, ваннисене йусамаççĕ.

Шăхасан районĕ çуракине йапăх хатĕрленни чи малтанах партилĕ-массăлă ĕçе начарлатса йанинчен килет. Вулав çурчĕсемпе хĕрлĕ кĕтессем вутă çук тесе ĕçлемеççĕ. Кулђт-сут учрежденийĕсем çураки çинчен пачах манна. Аслă Совета суйланă вăхăтра районĕпе пурĕ 200 агитатор пулнă пулсан, вĕсене халђ çухатса пĕтерне. Чылай колхозсемпе бригадăсем социалисăмла ăмăртăва хутшăнман.

Районри партипе совет органĕсен çак çитменлĕхсене пурне те шута илсе, çуракине хатĕрленес ĕçе халех кирлĕ пек, партипе правителствă хушнă пек организацилесе çитермеле.

М. Йакимов.

Çуракине хатĕрленес ĕçре оперативлă йертсе пымаççĕ

ЙЕТĔРНЕ. Районри нумай колхозсем 1937 çулта нихăçан пулман вăйлă тырпул туса илчĕç. Çакалах колхозĕ вăтам шутпа гектартан 100 пăт, Тури-Ачакри „Крестьянская газета“ колхоз 110 пăт тĕштырă туса илчĕç. Ку вăл малашне татах та вăйлă тырпул туса илме чĕнет. Анчах районри хăшпĕр колхоз руководителĕсем çакна ăнланса илмен-ха. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе халђ те хускану çук.

Тушкассипе Мăн-Чураш колхозĕнче вăрлăхсене суртлас, вăрлăх фончĕ хывас ĕçсене тытăнман та.

— Тасатнă вăрлăхсене хывма пирĕн уйрăм амбарсем çук. Çавăнпа епĕр колхозниксене тырă валеççе париччен вăрлăх суртлама тăхтас терĕмĕр,—тесе ларат колхоз председателĕ. Кунта пайанхи куна çитсе те 1837 çулхи тупăша ĕçкунĕсем тăрăх валеççе пĕтермен. Çавăнпа та çуракине хатĕрленесси кайа йулса пырат.

Çухра йалсоветне кĕрекен колхозсем („Клевер“, „Коминтерн“, „Машина“) çуракине хатĕрленесси çинчен шухăшламаççĕ те. Уйа тислĕк каларнисĕр пуçне урăх нимĕн те туман. Йалхуçалăх машинисене йусас тесе тимĕрç лаççи патне пырса лартнă та; унтах йур айĕнче тутăхса лараççĕ. Хăшпĕр машинăсен пайĕсене кăларса кайнă.

Йалсовет пленумĕнче çуракине хатерленмели агротехникă планне тунă. Ăна пурнăçа кĕртме уйхир çекцин руководителĕ Çухрари „Коминтерн“ колхоз председателне Ватраскин Йакова хушнă. Ватраскин ĕçе тытăнас выранне ĕçкĕре çÿрет.

Шăмат йалсоветĕнчи колхозсем те нихăшĕ те çуракине хатĕр мар. Апла пулсан та йалсовет председателĕ Алексейев М. оперативлă йертсе пымаст.

— Ку кунсенче колхозсенчĕ пулаймарăм, çуракине хатĕрленни çинчен тĕрĕс калама пултараймастăп. Акă сире сводкă, çакăнта пурте пур,—тесе сводкăсем тыгтарат. Анчах унăн сводкине ерне кайала тунă ĕçсене çеç кăтартат.

Демкинăри „Броневик“ колхоз председателĕ Василйев нимĕн вăтанмасарах: „Ман колхоз çуракине хатĕрленессипе вырăнтан та тапранман-ха. Йалхуçалăх машинисене йусама, вăрлăх суртлассине, тислĕксене пухас ĕçсене т. ыт. тума тытăнман“, тет.

Анаткасри „Октябĕр“ колхозăн вăрлăхсене суртлама Тушкасси колхозĕнчен трийер илсе килмеле пулнă, ăна пайанхи куна та кÿрсе килмен. Тушкассинче трийер ахалех ларат.

Йулашкинчен çакна каламала: —райçĕрĕç пайĕ пайанхи куна та çуракине хатĕрленес ĕçре колхозсемпе оперативлă йертсе пымаст. Райçĕрĕç пай пуçлăхĕ Лепешкин ку таранчен колхозсем çуракине йапăх хатĕрленнине ăнланса илеймен. Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем колхозсенче сахал пулаççĕ. Çĕрĕç пайĕн аслă агрономĕнчен—Волковран: мĕнле колхоз кăçал çуракине лайăх хатĕрленет?—тесе ыйтсан,—Ан ыйтăр есĕр ăна. Каçпала килме пултаратăр. Кайăр халђ кунтан,—тесе ларат.

Райĕçтăвком çĕрĕç пайĕ çине тивĕçлипе çаврăнса пăхмаст.

Ник. Цветков.

Кăшарни

Йевангели вĕрентнине ĕненес пулсан, христос Иордан йатлă йуханшывра тĕне кĕнĕ пулат. Чиркÿ çавна çулсерен уйавлат. Уйавлат çеç те мар, ачасене тĕне кĕртме хĕтĕртет.

Анчах йевангели, ниçта та вĕçне вĕçе çыхăнтараймансккер, кунта та пуçламĕшпе вĕçне тупса параймаст.

Чи авалхи йевангели, Марк йевангелийĕ, христос тĕне кĕни çинчен çапла каласа парат: Иисус Назаретран пынă та Иоан патĕнче Иорданра тĕне кĕнĕ. Иисус шывран тухнă чухне пĕлĕт уçălса кайнă. Турă сывлăшĕ, кăвакарчăн пулса, христос çине аннă. Пĕлĕт çинчен: „ку—манăн йуратнă ывăлăм, унра манăн пиллĕх пулĕ“, тенĕ сасă илтĕнсе кайнă.

Христос тĕне кĕнĕ çĕрте темĕн чухлĕ халăх пулнă. Анчах кăвакарчăн пулса аннă турă сывлăшне Иоаннсăр пуçне никам та курман. Христос хăй те курман имĕш.

Матфей йевангелис каланă тăрăх урăхларах тухат: Иоанн Креститель Иисуса тĕне кĕртесшĕн пулман. Мĕншĕн тесен, вăл хăйне çавăн пек чиса тивĕçлĕ мар тесе шутланă. Иисус çине тăрса каланă хыççăн тин, Иоанн ăна шыва кĕртсе кăларнă.

Лукан вара христоса кам тĕне кĕртни пачах та паллă мар. Иоанна,—тет вăл,—христос тĕне кĕриччен чылай малтан тĕрмене хупса лартнă.

Тăваттăмĕш йевангелис, Иоанн йатли, христос тĕне кĕни çинчен нимĕн те шарламаст.

Çапла ĕнтĕ, „турă“ кĕнекинче пĕр чĕлхе çук. Пулма та пултараймаст. Мĕншĕн тесен Иисусĕ те, крестителĕ те тата ытти те пулман. Вĕсене етем хăй пуçĕнчен шухăшласа кăларнă.

Шыва кĕртес йăла тахçан-авалах, христос тĕнĕ пуçланиччен нумай малтан, пулнă. Сăмахран, римлђансем ача çуралсан, сакăр йе тăхăр кунран ăна шыва кĕртсе йат панă. Тахçан-авал чухне Йегипетра та çавăн пек йăла пулнă. Тибетра та çавах.

Апла пулсан, кăшарни текенни христиансем „шухăшласа кăларнă“ йăпала мар. Вăл унччен нумай малтан пулнă. Христиансем тахçан-авалхи тĕн йăлисене хăйсене кирлĕ пек майлаштарнă. Тепĕр йенчен, христиансен тĕне кĕртес йăла иккĕмĕш ĕмĕрте кăна, пĕр 1800 çул йе 1750 çул кайарах, пурнăçа кĕнĕ. Христиансен чи авалхи кĕнекине, „Откровение Иоанна“ йатлине, 68—69 çулта çырнă. Анчах унта тĕне кĕртесси çинчен пĕр сăмах та çук.

Çав кĕнеке пирки Енгелс çапла çырат: „…тĕне кĕртни çинчен пĕтĕм кĕнекипе ниçта та пĕр сăмах çук, ытти фактсем те нумайĕшĕ пире, тĕне кĕртесси христианствăн иккĕмĕш тапхăрĕнчи институчĕ пулса тăни çинчен ĕнентерсе параççĕ… çавăнпа епĕр пĕр иккеленмесĕр тенĕ пекех çапла калама пултаратпăр: пирĕн автор тĕне кĕртесси çинчен пĕлмен, тĕне кĕртесси христиансем иудейсенчен пуçпех уйрăлса кайсан тин пуçланса кайнă“.[1]

Пуçпулса тăракан классем христос тĕнне хĕçпе те вутпа сарса пынă, христос йачĕпе йут халăхсене пăхăнтарнă, йут çĕрсене тыта-тыта илнĕ, тытса илнĕ çĕршывсенче хăйсем хуçа пулса пурнассине çирĕплетсе хунă.

[1] Енгелс — „К истории раннего христианства“. К. Маркс тата Ф. Енгелс, т. XVI, II-мĕш пайĕ, стр. 430.

XII-мĕш тата XIII-мĕш ĕмĕрсенче нимĕç рыцарĕсем (манах орденĕ) Балти таврашĕнчи халăхсем хушшине, халĕ Литва, Латви, Естони йышăнса тăракан вырăнсене христос тĕнне вăйпа хĕçĕплесе, вăрçăпа тапăнса кĕрсе сарнă. Нимĕç рыцарĕсем Новгородпа Псков хулисене те тытса илесшĕн пулнă. Анчах вырăс çарĕсем вĕсене 1242 çулта Чудский кÿлĕ пăрĕ çинче паттăрăн çĕмĕрсе тăкнă.

Авалхи Руçра та христос тĕнне вăйпа ирĕксĕрлесе йышăнтарнă. Кийев князĕ Владимир, 988 çулта кийевлђансене Днепр шывне кĕртсе кăларнăскер, Псковпа Новгород çыннисене тĕне кĕртме шут тытнă. Çав майпа вăл Çурçĕре пысăк çар пухса йанă. Çарпа пĕрле пупсемпе манахсем сĕтĕрĕнсе пынă. Тĕне кĕме килĕшмен çынсене нумайĕшне вĕлерсе пĕтернĕ, йалсене чылайĕшне çунтарса йанĕ. Çапла майпа тĕне кĕртнĕ, çапла майпа Владимир çурçĕрти хуласенче хăйĕн влаçне çирĕплетсе пынă.

XV-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче испанецсем Америкăна тупса уçнă. Уçнă та унти „суйа тĕнлĕ“ халăхсене христос тĕнне йышăнтарнă. Тĕне кĕмесĕр турткаланса тăракан çынсене темĕн тĕрлĕ асаплантарса пĕтернĕ, вут çине пăрахса çунтарнă, çака-çака вĕлернĕ, чĕрĕллех касса туранă т. ыт. те.

Пĕр князь пекскерне манах тĕне кĕме ÿкĕтленĕ. Лешĕ аптăранă йенне: „йурат, тĕне кĕрĕп; анчах вилсен райа лекĕп-ши?“ тесе ыйтнă. „Нимĕн иккеленмели те çук, савнă ывăлăм,—тесе ответ панă манах,—тĕне кĕнĕ çылăхсăр çынна турă тÿрех райа кĕртсе йарат: Райри ырлăхпа савăнса кăна пурăн“. Князя ответ килĕшнĕ. „Тăхтăр-ха,—тенĕ вăл,—манăн атте те анне те вилнĕ. Вĕсем манпа пĕрле райра пулĕç-ши? Вĕсемсĕр маншăн рай та рай пулас çук“. Манах кăна хирĕç çапла ответ панă: „Паллах, вĕсем райра пулас çук, вĕсем вĕт тĕне кĕмен: тĕне кĕмен çынсене вăлђлă райра вырăн çук“. Князь хурланса уннĕ. „Апла епĕн, вилсен те вĕсене курас çук?—тенĕ вăл. —Вĕсем тамăкра пулаççĕ, тетĕр. Апла пулсан, мана та сирĕн рай кирлĕ мар; епĕ хамăн атте-аннене курасшăн“. Князь тĕне кĕме килĕшмен. Ăна вара манахсем „аншĕ-амăшĕ патне“ йанă.

Христос тĕнне чăвашсем хушшине те вутпа тата хĕçпе сарнă. 1740 çулти сентабĕрĕн 11-мĕшĕнче чăвашсене тĕне кĕртме йури кантур организациленĕ. Çав кантур 21 çул хушшинче 191.211 чăваша тĕне кĕртнĕ.

Чăвашсем мĕн пур майсемпе хирĕçнĕ. „Вĕсем пупсене сăмах çитерекенсем, тăшмансем, хĕсĕрлекенсем тесе шутланă… Чăвашсем, май килнĕ таран, хăйсене пăхăнтаракансен куçĕ умĕнчен тарма тăрăшнă. Вĕсем аслă çулсенчен, пысăк йуханшывсенчен айаккарах, мĕнле те пулин пĕчĕк шыв хĕрне тарса вырнаçнă“[2]).

Ĕненекенсем халĕ те чылайĕшĕ хăйсен ачисене шыва кĕртсе йат хураççĕ, халĕ те-ха кăшарни „праçнĕкне“ уйавлаççĕ. Анчах кăшарни мĕн чухлĕ етем пурнăçне пĕтерни çинчен, кăшарнийе пула мĕн чухлĕ йун тăкăнни çинчен шутламаççĕ.

Чăн та, пĕтĕмпе тавçăрса илсен çуçпуç вĕриле тăрат вĕт. Христос тĕнне сарас сăлтавпа мĕн чухлĕ вăрçă вăрçнă, мĕн чухлĕ çынна вутта пăрахса çунтарнă, мĕн чухлĕ çакса вĕлернĕ, мĕн чухлĕ касса туранă, катăргăна хăваланă, тĕрмере çĕртнĕ. Шыва кĕртнĕ хыççăн мĕн чухлĕ кăкăр ачи чирлесе вилнĕ. Вĕсен шучĕ те çук.

Кама усă кÿнĕ вăл? Паллах, експлоататорсене—капиталиссене, помещиксене, купцасене, пупсене, кулаксене т. ыт.

[2] В. Сбоев—Чуваши в бытовом, историческом и религиозном отношениях. 1865 ç., стр. 12.

харампырсене. Кам хÿтĕленĕ тĕне? Ĕççыннисен вилĕмлĕ тăшманĕсем—експлоататорла классем. Православи вĕсен аллинче влаçне çирĕплетмели меслетсенчен пĕри, ĕççыннисене пусмăрта тытса усрама пулăшакан орудисенчен пĕри пулнă.

Совет Сойузĕнче експлоататорла классем çук. Вĕсене тĕппипех пĕтерне. Совет Сойузĕнче çынна çын експлоатацилесси çук. Ăна тĕппипех пĕтернĕ. Совет Сойузĕнче халăхсем пĕрне-пĕри шанмасăр пурăнасси, пĕр-пĕрине хирĕçесси-тăвасси çук. Совет халăхĕсем пĕр-пĕрипе чăн-чăнах тăванлă, туслă килĕштерсе пурăнаççĕ. Апла пулсан, совет çĕршывĕнче, социалисăм йалтах çĕнтернĕ çĕршывра тĕнĕн социаллă тымарĕсем валђли нимĕнле никĕс те çук. Тĕнĕн тĕп тымарĕсене касса татнă.

Анчах пирĕн çĕршывра експлоататорла классен йулашкийĕсем, пуçпех çĕмĕрсе тăкман тăшмансем пур-ха. Вĕсем кивĕ стройа, капиталисăмлă стройа, кайала тавăрасси çинчен ĕмĕтленме пăрахман. Вĕсем тĕншĕн, тĕне упраса хăварасшăн ăшаланаççĕ.

Пирĕн çĕршывра йединоличниксем те пур-ха. Вĕсем нумай мар, анчах пур-ха. Вĕсен идеологийĕ, паллах, колхоз идеологийĕ мар. Чиркÿ çав çынсем çине чылай тайăнса тăрат.

Чиркÿ хресченсен нумайĕшĕсен кулђтури çитĕлĕклĕ марри çине те тайăнат. Нумай тĕслĕхсенчен пĕри: 1936 çул вĕçĕнче, халăх переписĕ умĕн, пупсем ачасене тĕне кĕртессишĕн агитацилеме тытăнчĕç. Пупсен ултавлă танатине лекнĕ çынсем тупăнчĕç. Сĕнтĕрвăрри т. ыт. хăшпĕр районсенче пупсен ултавлă сăмахне итленĕ çынсем 5—6 çулхи ачисене тĕне кĕртнĕ тĕслĕхсем те пулнă.

Тĕне кĕртни „пуçласа çылăха кĕнинчен“ тасатат, тесçĕ пупсем. Мĕн вăл „пуçласа çылăха кĕни“? Библи калат; Адампа Йевă ырăпа усала пĕлтерекен йăвăçăн çимĕçне татса çинĕ. Çавăн хыççăн вĕсем хăйсенчен пĕри арçын, тепри хĕрарăм иккенне пĕлнĕ, тет.

Вĕскен калаçан, Адампа Йевă пурнăç ылакне тутанса пăхнă. Анчах турра çав йăпала килĕшмен. Вăл вара каланă: „Акă ĕнтĕ Адам пирĕн пекех ырăпа усала пĕлекен пулчĕ, халĕ ĕнтĕ хăйĕн аллине малала ан тăстăрчĕ, çавăн пекех пурнăç йăвăççинчен татса ан çитерчĕ, сине ĕмĕр пурăнакан ан пултăрчĕ“, тенĕ“.

„Пуçласа çылăха кĕни“ çинчен вĕрентекенĕсем, тĕрлĕрен харампырсем, библи пумахне хăйсем нихăçан та ĕненмен. Вĕсем çаратнă, пусмăрланă, çынсене вĕлернĕ—çылăх пуласран хăраса тăман. Тĕп ĕççыннисене „пĕлĕт çинчи райшăн“ çĕр çинче пурне те тÿссе пурăнма вĕрентет. Вăлах харампырсен ирсĕр те пуллă ĕççене тÿрре кăларат.

Тĕне кĕртни çынна усал йалăçĕнчен хăтарат, тесçĕ пупсем. Епĕр пĕлетпĕр, турри те усалĕ те çук. Турă мăр çынна пултарнă, çын ăна хăйĕн пуçĕнчен шухăшласа кăларнă. Апла пулсан, мĕншĕн-ха çук усалтан хăтăлмалла? Тĕне кĕни усал илĕртесĕн çăлат пулсан, мĕншĕн-ха çынсем çылăха кĕреççĕ? Апла пулсан, ăçта вăл кăшарни хăвачĕ? Çапла ĕнтĕ, библи пумахĕн хирĕçÿвĕсем кунта та çавна пекех шĕвĕрĕлсе тăраççĕ.

Кулленхи тĕне хирĕçлĕ ĕçре тĕнĕн сийенлĕхĕ çинчен, чиркÿн контрреволђуцилĕ ролĕ çинчен тăтăшах, чăтăмлăн, ывăнма пĕлмесĕр ăнлантарса парас пулат. Кăшарни тĕн ултавĕсенчен пĕри пулса тăнине кăтартса парас пулат.

В

Италири фирмăсемпе учрежденисене тӳлемелисем ҫинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Италири фирмăсемпе учрежденисем чылай суту-илӳ операцийĕсем тăрăх тӳлессине хăйсем тĕллĕнех чарса тăнă пирки тата тӳлессине малашне те ҫавăн пек чарса тăни пулĕ тесе шикленмеле пирки, ҫавăн пекех тата Совет правителстви ҫав тĕлĕшпе йанă нотă ҫине Итали правителствинчен ответ илмен пирки, ҫавна пула ССР Союзĕ материаллă тăкак курни ан пултăр тесе, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫапла йышăнат:

1. ССР Союзĕн Италири суту-илӳ представителствине тата ССР Союзĕн хуҫалăх организацийĕсене Италири учрежденисемпе фирмăсене, вăл шутрах виҫҫĕмĕш ҫынсене панă обйазателствăсемшĕн те, тӳлемелисене, ҫак постановленийе пичетлесе кăларнă хыҫҫăн тӳлемеле килсе тухма пултараканнисене те, вăхăтлăха, йатарласа кăтартусем паричченлĕхе, Государствăн банкĕ ҫав обйазателствăсем тăрăх тӳлемелисем валĵи уҫакан счотсем ҫине хывма хушас.

2. ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йатарласа кăтарту париччен ҫав счотсем ҫинчен тӳлемелисене пĕртте куҫармала мар.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ В. МОЛОТОВ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕҫĕсене пăхакăнĕ Н. ПЕТРУНИЧЕВ.

Мускав, Кремĵ,
1938 ҫулхи йанварĕн 14-мĕшĕ.

* * *

Йулашки ҫулталăк хушшинче Италири хăшпĕр учрежденисемпе фирмăсем хăйсем тĕллĕнех, суту-илӳ договорĕсенче ун ҫинчен каланă пулин те—ĕҫе судра пăхтарса таталмасăрах, Совет Союзĕн хуҫалăх организацийĕсем Италийе сутнă таварсемшĕн тӳлемесĕр тăма пуҫланă. Сăмахран, Италин тинĕс министерстви пирĕн „Союз нефтеэкспорт“ организацирен мазут илнĕ. Договор тăрăх, мазутшăн укҫине ҫенĭабĕр уйăхĕнче тӳлемеле пулнă. Ҫав укҫана Италин тинĕс министерстви темиҫе хут ыйтсан та, тӳлемен, халĕ те тӳлесшĕн мар.

Италин пысăк фирмисенчен тепри те нефтеэкспорт пиркийех ҫавăн пек тунă (тӳлемен).

Унсăр пуҫне, Совет Союзĕн карапĕсене нимĕнле сăлтав ҫук ҫĕртенех Италири портсенче тытса чарнисем пулнă. Совет Союзĕпе Итали государствă пурлăхĕ пирки йатарласах тунă килĕшӳ пур пулин те, Италири учрежденисемпе фирмăсем ҫав килĕшӳве пăснă.

Ҫавна пула, Совет Союзĕн хуҫалăх организацийĕсем Италире малашне те тăкак курмала пулĕ, тăкак пулмала мар гаранти ҫук, тесе шутлаҫҫĕ.

Италири учрежденисемпе фирмăсем ҫавнашкал хăтланнă пирки Совет Союзĕ, унăн хуҫалăх организацийĕсем тăкак курасран сыхланмала пултăр тесе, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ҫӳлерех пичетленĕ постановленийе йышăнмала килнĕ.

(ТАСС).

Китайри вăрҫă

Йапони империализмĕ Китай халăхне хирĕҫ пуҫласа йанă вăрҫă ултă уйăх ытла пырат ĕнтĕ.

Йапони военщини кĕске вăхăтла вăрҫăпа ҫĕнтеретпĕр, тесе шухăшланисем пурнăҫа кĕмерĕҫ. Ҫар техники тĕлĕшĕнчен Китай ҫарĕнчен ытларах хĕҫпăшаланнă Йапони ҫарĕсем, пысăк ҫухатусем туса, Сурҫĕр Китайри пысăкрах пайне тата вăтам Китайăн чылай районĕсене тытса илме май килнĕ. Ҫапах та, йапонецсем Китай ҫарĕсен ҫапăҫу пултарулăхне ҫĕмĕрме, вĕсен чĕрĕ вăйне пĕтерме пултараймарĕҫ.

Китай халăхĕ кĕрешӳве вĕҫне ҫитиччченех тăсма, иртĕнсе кайнă интервентсене таван ҫĕршывран пĕтĕмпех хуса кăларма хатĕр тăрат.

Китай правителстви халĕ ҫара урăхлатса ҫĕнетес тата ҫирĕплетес тĕлĕшпе пысăк ĕҫсем тăват.

Вăтам Китайра ҫапăҫусем халĵхи вăхăтра, пуринчен ытла, Нанкинран ҫурҫĕр-хĕвелтухăҫнелле, Ĭаĵцзин—Пукоу чукунҫулĕ тăрăх, ҫавнашкалах Нанкинран кăнтарланарах тата кăнтăр-хĕвелтухăҫнерех пыраҫҫĕ. Йапонецсем Ҫурҫĕр Китайра ҫапăҫакан Йапони чаҫĕсемпе пĕрлешме тăрăшса Йанцзы йуханшывĕнчен ҫурҫĕререх пысăк вăйсене пĕр ҫĕре пухнă.

Ҫурҫĕр Китайра уйрăмăнах вăйлă ҫапăҫусем Шаĵдун тата Шаĵси провинцисенче пыраҫҫĕ.

Китайăн йаланхи ҫарĕсемпе пĕрле, Йапони захватчикĕсене хирĕҫ Китай партизанĕсен отрйачĕсем активлăн ҫапăҫаҫҫĕ. Йанварĕн 15-мĕшĕнче партизансемпе Йапони ҫарĕсем хушшинчи ҫапăҫусем Шанхай ҫывăхĕнчех пулса иртнĕ, вăл ҫапăҫусенче артиллерирен пени хулан кăнтăр хĕррисенех илтĕннĕ. Партизансем ҫапăҫни йапонецсемшĕн ҫав тери пысăк хăрушлăх пулнă, ҫав майпа Йапони командованин Шанхай ҫывăхĕнче ирĕксĕрех пысăк вăйсем тытмала пулнă.

Йапони командованийĕ фронтра, Йапони чаҫĕсемпе пĕрлех, Манчжоу-Го ҫарĕсем текен, урăхла каласан, Манчжурире Китай ҫыннисенчен йĕркеленĕ ҫарсемпе уса курма хăтланат. Анчах та, вăл ҫарсен политикăлă ҫирĕплĕхĕ пит сахал. Нумай пулмаст Вăтам Китайа йанă Манчжоу-Го чаҫĕсем восстани туса Китай партизанĕсем йенне тăрса каҫнă. Ҫурҫĕр Китайра Манчжоу-Го ҫарĕсем хушшинче темиҫе восстани те пулса иртнĕ.

Интервентсене хирĕҫ кĕрешме Китай халăхĕн сарлака массисем ҫĕкленеҫҫĕ. Китай халăхĕ ирĕклĕ хĕҫпăшаллă отрйадсене пиншерĕн ҫыранат. Пĕр Хенаĵ провинцинче ҫеҫ халĵхи вăхăтра Китай рабочийĕсемпе хресченсене 30 пин ҫынна хĕҫпăшаллантарнă

(ТАСС).

Чан Кай-ши зайавленийĕ

ЛОНДОН, йанварĕн 15-мĕш. (ТАСС). Хунаĵ провинцинче Китай ҫарĕсен полевой штабĕнче пурăнакан Рейтĕр агенствин корреспондентне Чан Кай-ши ҫапла каласа пĕлтерне: „Халĵхи вăхăтра епĕ ҫĕнĕ ҫар вĕрентсе ӳстеретĕп. Шанхай фронтĕнче ҫапăҫнă дивизисене улăштарса ҫĕнетме икĕ уйăх ерук кирлĕ. Епĕр Йапони ҫарĕсене хирĕҫ тăрасси оборонăн пĕр-пĕр кирлĕрех пункчĕсенче кăна пулса пымаст. Татти-сыпписĕр атакăсем туса йапонецсене йаланах хускатса тăрас тесе, епĕр пирĕн ҫĕршыв пысăккипе уса курăпăр. Епĕр йапонецсене хирĕҫ татăклăн ҫĕнтеречченех кĕрешĕпĕр“.

Китайри пăлхавҫă генералсене вĕлерне хыҫҫăн

ЛОНДОН, йанварĕн 16-мĕш. (ТАСС). Британ Йунайтед Пресс агенстви пĕлтерне тăрăх, Хаĵфу-цӳ, Ĵу-До-чуаĵ тата Ван Фулин генералсене вĕлерне хыҫҫăн, Чан-Кайши Ҫар совет председателĕн заместителне Фын Йуй-ҫан тата Шаĵси провинцинчи оборонăшăн ответлă пулнă Йан Си-шаĵа вырăнтан кăларнă. Фын Йуй-ҫан вырăнне Чжен цзйана, Йан Сишаĵ вырăнне Чжу Дене уйăрса лартнă.

Мадридра фашисла организаци членĕсене арĕсленĕ

ПАРИЖ, йанварĕн 15-мĕш. (ТАСС). Гавас агенстви пĕлтерне тăрăх, Мадридри полици ҫар ĕҫĕнче тупса палăртнă фашисла организаци членĕсене 153 ҫынна арĕсленĕ.

ССР Союзĕ мĕн пур суту-илӳ обйазателствисене пурнăҫа кĕртет

БРЮССЕЛ, йанварĕн 16-мĕш. (ТАСС). Белгин йутҫĕршыв ĕҫĕсен министрĕ СПААК, социалисла депутат Пиерар ыйтнине ответлесе, ССР Союзĕпе суту-илӳ ҫыхăнувĕ тытнишĕн кăмăллăн пулни ҫинчен каласа панă. ССР Союзĕн хăйĕн мĕн пур суту-илӳ обйазателствисене пурнăҫа кĕртет, тесе палăртса тунă СПААК.

Учителсен районри канашлăвĕн итогĕсем

ВĂРНАР. Учителсен районри канашлăвĕ вĕренӳре кайа йулса пынине пĕтересси ҫинчен сӳтсе-йаврĕ. Канашлу районри шкулсен ĕҫĕнче пысăк ҫитменлĕхсем пуррине кăтартса пачĕ.

Вĕренӳре кайа йулса пынине пĕтерес тĕлĕшпе уйрăмах туллимар вăтам шкулсем начар ĕҫлеҫҫĕ. Вĕренӳ ҫулĕн пĕрремĕш ҫурҫуллăхĕ пĕтнĕ тĕле туллимар вăтам шкулсенче вăтам вĕренсе пыракансен шучĕ 89,9 процент ҫеҫ пулнă. Ҫав вăхăтрах пуҫламĕш шкулсенче вĕренӳре ĕлкĕрсе пырасси 94,3 процент, вăтам шкулсенче 94,28 процент.

Мăнйал Елменти пуҫламĕш шкулта II-мĕш класра П. Василйев, IV-мĕш класра А. Василйева йултăшсем ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсем хăйсен ĕҫне чĕререн йуратаҫҫĕ. Вĕрентӳре тĕрлĕ кăтартулă пособисемпе, темăна лайăх ăнланма пулăшакан, ачасене интереслентерекен материалсемпе уса кураҫҫĕ. Вĕсем кашни ачана лайăх пĕлсе тăраҫҫĕ, кашни ачапа уйрăмăн, унăн вĕренӳ йенĕпе пултарулăхне кура ĕҫлеҫҫĕ. Ҫапла тимлĕн ĕҫленипе вĕсен шкулĕнче ачасен пĕлӳлĕхĕ ӳссех пырат. Пĕрремĕш ҫурҫуллăха II-мĕш класра 23 ачаран 4 ача „питĕ лайăх“, 6 ача „лайăх“, 12 ача „посредственно“ паллăсемпе кĕтсе илнĕ. Ҫак ҫурҫуллăхра 1 ачан кăна „начар“ паллă пулнă. Тăваттăмĕш класра та ҫавăн пекех. Каламала: Мăнйал Елменти пуҫламĕш шкул тата лайăхрах пĕлӳлĕ ачасем вĕрентсе кăларма пултарат. Анчах та шкулта чăваш, вырăс чĕлхисемпе тата историпе вĕрентмелли учебниксем пайан кунта ҫитсе те ҫук. Василйевсем ачасене вĕрентнипех лăпланса лармаҫҫĕ. Пушă вăхăтсенче вĕсем халăх хушшинче ĕҫлеҫҫĕ. ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавĕнче А. Василйева участкăри суйлав комиҫҫи секретарĕ пулса, П. Василйев агитатор пулса ĕҫленĕ. Вĕсем йалти массăпа таччăн ҫыхăнса тăраҫҫĕ.

Ҫавăн пекех Вăрнарти вăтам шкулта вĕренекенсем те вĕренӳ ҫулĕн пĕрремĕш ҫурҫуллăхне ăнăҫулăн вĕренсе пĕтерчĕҫ. Уйрăм классем тăрăх илсен I—IV-мĕш классенче вĕренекенсенчен вăтам отметкă илнисен шучĕ 99 процент, V—VII классенче 94 процент, VIII—X классенче — 93,5 процент шутланат. Шкула ҫӳресси те аван.

Ҫав вăхăтрах районра начар ĕҫлекен шкулсем те сахал мар-ха. Коĵцовкăри вăтам шкулта ачасене паха пĕлӳ парса чăн-чăн коммунисла вĕрентсе ҫитĕнтерессине ҫиелтен пăхаҫҫĕ. Кунта учител, вăлах пионер вожатăйĕ пулса ĕҫленĕ, халăх тăшманĕ Мумиков ачасене хулиганла ĕҫсем тума вĕрентнĕ. Класри ҫитменлĕхсене директăр та, ытти учителсем те курсах тăнă, анчах Мумиковăн тăшманла ĕҫĕсене „уйăрса“ илеймен.

Ҫавнашкалах Уппер, Санарпуҫ, Алкаҫăн, Кушлавăш, Чăрăш Шĕнер туллимар вăтам шкулсене те ырламали ҫук.

Кушлавăш, Уравăш, Алкаҫăн шкулĕсенче халăх тăшманĕсем, буржуалă националиссем йăва ҫавăрнă пулнă. Вĕсем ачасене сийенлĕ ĕҫе йавăҫтарма пăхнă. Ҫавăн пиркийех ĕнтĕ вĕренӳ пахалăхĕ те ку шкулсенче питĕ начар вырăнта тăрат.

Вĕренӳре кайа йулса пырассине пĕтерес, шкул ĕҫне пур йенчен те лайăх йĕркелес тĕлĕшпе районри сутĕҫ пайĕ ку тарана ҫитсе палăрмала татăклă утăмсем тăвайман-ха. Кăна ҫак тĕслĕхсенчен те курма пулат. Иртнĕ вĕренӳ ҫулĕнче ҫамрăк учителсен канашлăвĕсем 3 хутчен пулнă пулсан, [illegible]сем пĕрре те пулман. Пĕлтĕр историксене 3—4 хутчен пухса семинар иртернĕ, кăҫал ун ҫинчен шарламаҫҫĕ те. Каламала, истори вĕрентес ĕҫ районри шкулсенче уйрăмах начар пырат.

Чылай ҫĕрте учебниксем ҫитмеҫҫĕ, хăшпĕр шкулсенче вĕсем пачах та ҫук. Учителсем хăйсен политикăла-методикăла пĕлӳлĕхне хăпартас тĕлĕшпе пĕр шкулта та йĕркелĕн ĕҫлемеҫҫĕ. Районти сутĕҫ пайĕпе профсойуз комитечĕ ку ĕҫ ҫине сулхăн кăмăлпа пăхаҫҫĕ.

Пирĕн шкулсенче вĕренӳре кайа йулса пырассине иккĕмĕш ҫурҫуллăхра тĕппипех пĕтермеле. Вĕренӳ пахалăхне пур йенĕпе те ҫӳлтен ҫӳлерех хăпартса пымала.

Ст. Улангай.

Клубри йĕркесĕрлĕхсем

Ишлей. Ыхракассинчи „Ҫĕнтерӳ“ промысла ертелĕн библиотекинче тĕрлĕрен кĕнекесем пĕтĕмпе 600 ытла. Лайăх кĕнекесем сахал мар кунта. Ҫав вăхăтрах библиотекăра буржуалă националиссен тăшманла произведенийĕсем те халĵ те выртаҫҫĕ. Библиотекă пуҫлăхĕ Иван Никифоров кун ҫинчен аса та илмест.

Клубра куĵтмассăлă ĕҫе те йĕркелесе йаман. Клуб ăшĕ таса мар. Стена хаҫачĕ те вăхăтра тухмаст. Драмкружок виҫĕ уйăхра икĕ хутччен ҫеҫ спектакĵ лартса кăтартрĕ.

Г. Коĵă.

Командăсен ăмăртăвĕ

Физкуĵтурăпа спортăн Шупашкар хула комитечĕ йанварĕн 18-мĕшĕнче Атăл леш йенчи пĕр кун канмали базăра, йĕлтĕрпе чупассипе пĕрремĕш вырăна тухас тĕлĕшпе йĕлтĕрҫĕсен командисен ăмăртуне иртерет.

Ăмăрту программинче ҫакăн пек дистанцисем тума палăртнă: арҫынсем валĵи 20—50 километр хушши, хĕрарăмсем валĵи 5—10 километр хушши.

Ăмăртува „Спартак“, „Динамо“, „Темп“, „Учитель 6“, „Буревестник“ спорт обшчествисен тата уйрăм коллективсен командисем хутшăнаҫҫĕ.

В. В.

Вăрлăхсене суртларĕҫ

Хитекушкăнри „Ҫĕнĕ ҫул“ колхозра вăрлăхсене суртласа ҫитерчĕҫ. Уйа шчитсем лартса 20 гектар ҫинче йур тытрĕҫ. Ҫĕре ҫемҫетмели вырăнти йапаласенчен тислĕк 295 лав, торф 960 лав уйа кăларчĕҫ.

К. И.

Ленин кунне иртерме хатĕрленеҫҫĕ

Владимир Илйич Ленин вилни 14 ҫул тултарнине асăнса, йанварĕн 21—22-мĕшĕсенче Шăхасан районĕнчи пур учрежденисемпе колхозсенче те траурлă пухусем пулса иртеҫҫĕ. Вăл пухусенче „Ленинсăр 14 ҫул“ темăпа докладсем пулаҫҫĕ.

Унчен Ленинăн пурнăҫĕпе ĕҫĕсем ҫинчен, Сталин йулташ йертсе пынипе, Ленин туса хăварнă парти мĕнле ĕҫлесе пыни ҫинчен халăха докладсем, калаҫусем туса параҫҫĕ. Вăл калаҫусене иртерме агитаторсене уйăрса, 3 кунлăх семинар туса иртерчĕҫ.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Шупашкар хулинче електроенергипе уса курас йĕркесемпе правилăсем ҫинчен

Шупашкар хула Совечĕ 1937 ҫулхи декабĕрĕн 29-мĕшĕнче йышăннă

ОБЙАЗАТЕĴНĂЙ ПОСТАНОВЛЕНИ

РСФСР Тĕпĕҫтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1931 ҫулхи мартăн 30-мĕшĕнче „Обйазатеĵнăй постановленисем кăларасси ҫинчен“ йышăннă постановлени тăрăх, електроенергипе тĕрĕс уса курас тĕлĕшпе Шупашкар Хула Совечĕн Президиумĕ ҫапла йышăнат:

1. а) уйрăм ҫынсене тата учрежденисемпе предприйатисене хăйсем тĕллĕн електричествă сутипе уса курма;

б) мĕн чухлĕ лампăпа тата мĕн чухлĕ хăватпа уса курма ирĕк панинчен иртсе ытлашши уса курма—татăклăнах чарас.

Учрежденисенче каҫхи вăхăтра заĵатисем пулакан пӳлĕмсенче ҫеҫ електричествă сутипе уса курмала, заĵатисем пĕтнĕ хыҫҫăн дежурнăй пӳлĕмĕсĕр пуҫне ытти пӳлĕмсенче пуринче те ҫутă сӳнтермеле.

2. Електричествăпа ăшăтмали приборсемпе (утюгсемпе, шыв вĕретмелисемпе, каструĵсемпе т. ыт. те), вăл приборсене Водосветăн абонент уйрăмĕнче регистрациленĕ хыҫҫăн уса курма йурат.

3. Ҫутă линине водосвет монĭорĕсем ҫеҫ тата абонент ҫырса панă зайавлени тăрăх дирекци нарйад панă хыҫҫăн ҫеҫ кӳртме пултараҫҫĕ.

4. Пур ҫĕнĕ стройкăсем те електричествă сутипе уса курма водосвета зайавкă тăратса унпа килĕштермеле тата монтаж тума ирĕк илмеле.

5. Водосвет, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1931 ҫулхи августăн 16-мĕшĕнче електроенергипе уса курнăшĕн тӳлемели сруксем ҫинчен йышăннă постановлени тăрăх тĕрĕс ĕҫлесе пырса, парăмне тӳлемен потребителсене счотчик кăтарту илнĕ хыҫҫăн вунă кунран кайран нимĕн асăрхаттарса тăмасăрах кăларса пăрахмала. Електроенергипе уса курнăшăн тӳлесе тăма ҫакăн пек сруксем тăвас:

а) счотчиклĕ пур учрежденисемпе организацисем тата хулара пурăнакансем валĵи счотчик кăтартăвĕсене илсе расчот кĕнеки ҫине ҫырсан пилĕк кунччен;

б) счотчикĕсем ҫук учрежденисемпе организацисем тата хулара пурăнакансем валĵи, електроенергипе уса куракан кашни уйăхăн пиллĕкĕмĕш кунĕччен, урăхла каласан, уйăх пĕтиччен 25 кун малтан;

в) вăхăтра тӳлеменшĕн тӳлев пуҫланса кайнă кунран тӳлесе татнă куна ҫиттиччен пĕрлешӳлĕ сектортан 0,05 процент, уйрăм сектортан 0,1 процент пени илмеле.

5. Учрежденисемпе организацисен руководителĕсене електроенергипе тирпейлĕ уса курнине тата расчотсене пăхса пыма ответлă ҫынсене, вĕсен хушаматне, йатне тата ашшĕ йатне абонент кĕнеки ҫине ҫырса, уйăрса хума хушас.

7. Моторлă установкăсем пур предприйатисем, ҫулталăкри вăхăт тăрăх кашни уйăх валĵи водосвет туса панă графике ҫирĕп тытса ĕҫлесе пымала.

8. Електричествă оборудованилĕ пӳлĕме урăх потребител йышăнсан, пӳлĕм йышăннă потребител, ҫурт управленин ҫирĕплеттерсе, пӳлĕме йышăнсан, 3 кунран кайа йулмасăр енергипе уса курасси ҫинчен зайавлени ҫырса памала.

Ҫуртран тухса кайакан потребител електроенергипе уса курма чарăнас срукчен ҫитиччен 7 кун малтан ун ҫинчен електроенерги паракан предприйатийе ҫырса пĕлтермеле.

Ҫӳлте кăтартнă йĕркесене туманшăн електроенерги паракан предприйати ҫав пӳлĕм ҫинче тăракан парăма йе ҫав ҫуртран куҫса кайнă потребителрен йе ҫав ҫурта ҫĕнĕрен йышăннă потребителрен електроенерги паракан предприйатипе условисем ҫинчен вăхăтра татăлмасан пĕтĕмĕшпех илме пултарат.

9. Електроенерги паракан предприйати, ĕлĕк уса курнă пӳлĕмшĕн парса татман потребителе, ĕлĕкхи парăмне пĕтерменĕпех парса татиччен, вăл потребител хăй йачĕпе енерги илсе тăма килĕшет-и, йе урăх ҫын йачĕпе килĕшет-и, пурĕ-пĕрех ток памасан та пултарат.

10. Електроенергипе счотчиксĕр уса куракансене тĕрĕсленĕ чух лампă йе ват, хисепне, ун ҫинчен електроенерги паракан предприйатийе пĕлтермесĕрех, ӳстернине тупсан, потребител ытлашши вăхăтпа уса курнăшăн иртнĕ хут тĕрĕсленĕ кунран пуҫласа ҫак куна ҫити виҫĕ хак тӳлемеле. Унччченхи хăвата чакарасси ҫинчен потребител електроенерги паракан предприйатийе 5 кун малтан пĕлтермеле. Унсăрăн потребител малтан зайавлени панă тăрăхах тӳлесе тăрат.

Ҫирĕплетнĕ хăвата улăштарассине кашни уйăхăн пĕрремĕш кунĕнче ҫеҫ тума йурат.

11. Ҫак постановленийе пăснăшăн айăплисене административлă йĕркепе укҫан 100 тенке ҫити штраф тӳлеттереҫҫĕ, йурийех пăсакансем уголовнă йĕркепе ответ тытаҫҫĕ тата вĕсене електроенерги пама та чарăнаҫҫĕ.

12. Пломбăсăр йе розеткăсăр сĕтел ҫине лартакан лампăсемшĕн 60 ваттлă лампă шучĕпе тӳлев илеҫҫĕ, патрон ҫинчи пломбăна йе розеткăна илнĕшĕн ответ тытараҫҫĕ.

13. Абонемент уйрăмĕнче регистрацилемен електричествăпа ăшăтакан приборсемпе (утюгсемпе, чейниксемпе, шыв ăшăтмалисемпе т. ыт. те) уса курнине тупсан, електричествăпа ăшăтмали прибор хакĕнчен 5 хут ытларах штраф илеҫҫĕ.

14. Ҫак постановленийе пурнăҫланине тĕрĕслесе тăрас ĕҫе Водосвет контроĵорĕсем тăваҫҫĕ.

Ҫак постановлени ăна пичетлесе пĕлтернĕ кунран пуҫласа ĕҫе кĕрет тата вăйра икĕ ҫула пырат.

Хула Совечĕн председателĕ Каплин.
Секретарĕ Кобозова.

— АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ —

Йанварĕн 18-мĕшĕнче
ВЫРĂСЛА СПЕКТАКĴ

ЛАВРЕНЕВ

„РАЗЛОМ“

(4 пайлă)

Режиҫҫор С. С. Марĭагин лартат.
Художник Йе. Н. Сапожников.
Талон № 85. Абонемент № 3, талон № 11

АНОНС! Шекспир.

„ОТЕЛЛО“

ЛАРТМА ХАТĔРЛЕНЕҪҪĔ.

Водопйанов йачĕпе тăракан Шупашкарти атă-пушмак хапрăкне

— КИРЛĔ: —

1. Планпа экономически уйрă мĕн пуҫлăхĕ,
2. Бухгалтер каĵкуĵатор;
3. Икĕ картотетчик.

Ĕҫукҫи килĕшӳ тăрăх.

Пур учрежденисене, организацисене тата предприйатисене

Производствăлă-техникăла тата строителствă валĵи кирлĕ материалсене кӳрсе тăратакан Чăвашсен Государствă предприйатине „ЧĂВАШСНАБСБЫТА“ тата унăн Шупашкарти, Ҫĕмĕрлери, Улатăрти, Канашри, Сĕнтĕрвăрринчи тата Йĕтĕрнери УЙРĂМĔСЕНЕ—РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 ҫулхи нойабĕрĕн 14-мĕшĕнче тата Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 ҫулхи декабĕрĕн 21-мĕшĕнче йышăннă постановленисем тăрăх—1938 ҫулхи йанварĕн 1-мĕшĕнчен пĕтернĕ. „Чăвашснабсбыт“ вырăнне „Росснабсбытăн“ Чăваш республикинчи уйрăмĕ организациленет. Адрес: Шупашкар хули, Хĕрлĕ плошчĕд, 16. Телефонсем: № 1-60, 5 15, 1-13.

„Чăвашснабсбыт“ тăрăх претензисем пур пулсан 1938 ҫ. февралĕн 10-мĕшĕччен „Росснабсбытăн“ Чăваш республикинчи уйрăмне памала.

3—2

Долгополĵанăри вăрманхими завочĕн сухăр-смала хатĕрлекен

Атратри кантурĕ

1937 ҫулта ĕҫленĕшĕн ĕҫукҫи илеймесĕр йулнă рабочисене Атрат йалне укҫа илме пыма чĕнет.

Сруk—кăҫалхи йанвар,

3—3

Шупашкарти Коммуналă хуҫалăх пайĕ

Атăл хĕрринчен хулана хăйăр турттарма подрйад парат.

Хăйăр турттарас текенсен Коммуналă хуҫалăх пайне кĕрĕшме пымала.
Адрес: Шупашкар, К.-Маркс урамĕ № 1, (малтан Госбанк пулнă ҫурт).
Хулари Коммуналă хуҫалăх пайĕ.

2—2

Чăвашпединститут заочникĕсене асра тытма

Кивĕ наборта илнĕ йестествозн ни, чĕлхе тата литературă уйрăмĕнчи 1-мĕш курссен 1938 ҫулхи йанварĕн 25-мĕшпе 30-мĕш хушшинче зачотлă ҫессӥ пулса иртет. Ҫессире заочниксене консуĵтацисем параҫҫĕ, екзаменсем пулаҫҫĕ тата II-мĕш курссене куҫараҫҫĕ. Ҫĕнĕ наборта илнĕ заочниксене ҫурхи шывсем тапраниччен уйрăмăн чĕнсе пухаҫҫĕ.

Дирекци.

Пур колхозсене те пĕлсе тăма

Клевер вăррине планран ытлашши Государствăна панăшăн премӥ памали срока правителствă 1938 ҫ. февралĕн 1-мĕшĕчен тăснă. Клевер вăррине планран ытлашши панă колхозсен вăрлăх фончĕсене хывса пĕтерни ҫинчен справкăсем тăратса февралĕн 1-мĕшĕччен премисем илмеле.

Йĕтĕн хатĕрлев кантурĕ.
Госсортфонд.

2—2

Росснабфиĵм трестăн Чăваш Кантурĕ

Чăваш АСС Республикинчи кинотеатрсен екранĕсем ҫине

САСЛĂ ИЛЕМЛĔ ҪĔНĔ ФИĴМ КĂЛАРАТ:

„ДОЧЬ РОДИНЫ“

„Белгоскино“ студийĕ тунă.

Сценари авторĕ ИОГАН ЗЕЛЬЦЕР. Режиҫҫор Искусствăн тава тивĕҫлĕ ҫынни В. В. КОРШ-САБЛИН. Композитор—Искусствăн тава тивĕҫлĕ ҫынни орденоносец И. ДУНАЙЕВСКИЙ.

Вырăнсенчи кино-театрсенче хăҫан кăтартассине асăрхăр.

АВТОХУҪАЛĂХ РУКОВОДИТЕЛĔСЕНЕ ТАТА ШОФЕРСЕНЕ

1938 ҫулхи йанварĕн 24-мĕшĕнче 15 сехетре, „Динамо“ клубĕнче

(Йарославскайа урамĕнчен кĕмеле)

Шупашкар хулинчи ПУР АВТОХУҪАЛĂХ РУКОВОДИТЕЛĔСЕН тата ШОФЕРСЕН ПĔРЛЕШӲЛĔ ПУХУВĔ пулат.

Кун йĕркинче:

1. Гутапсбыт, Росснабсбыт Чăваш уйрăмĕ тата Ҫĕрĕҫ халăх Комиссариачĕ автоматериалсем тăратас ĕҫсем мĕнле тăни ҫинчен докладсем туса параҫҫĕ.
2. Ҫыхăну Управленин автобази, Шупашкар хула коммуналă хуҫалăхĕ тата Чăвашавтоĭужтрест хăйсен автобазисем мĕнле ĕҫлени ҫинчен докладсем туса параҫҫĕ.
3. Автопарка техника тĕлĕшĕнчен пăхса тухнин вывочĕсем тата автотранспорт правилисене пăсакансемпе кĕрешесси ҫинчен.

Автохуҫалăх руководителĕсен тата шоферсен обйазателнă пымала.

Чăваш АССР Шалти Ĕҫсен Халăх Комиссариачĕн Рабочисемпе Хресченсен Милици Управленийĕ.

„Чăваш коммунĕ“ ҫырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 5 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алҫырăвĕсене кайала памаҫҫĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 34. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2. Тираж 14.500. 53—52 см. 1—1 п. л.